Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1938 ФЕВРАЉ 11 ЕРНЕКУН 34 (4847)-мӗш №

Чӑваш Коммунӗ

20-мӗш çул тухать ● ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Тӗпӗçтӑвкомӗн хаçачӗ ● Пӗр №-рӗ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСӖ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторӑн 0—67, Ред. заместителӗн 0—88, Редакци секретарӗн 4—40, Дежурнӑйӑн 6—23

Ӗçри бољшевикла стиљ—шанасси тата тӗрӗслесси

Кадрсене бољшевикла йертсе пыма çынсене ӗçре **шаннипе** пӗрлех, вӗсем хушнӑ ӗçе пурнӑçа кӗртнине **тӗрӗслемелле.** Ленин—Сталин партийӗ çынсене пысӑкрах ӗçе хӑйулӑн та çине тӑрса лартса пырать,— ун пек тӑвакании тӗнчере урӑх пӗр парти те çук. Кӗçӗн ӗçре пулнӑ партири тата партире тӑман нумай вунпар çынсене, уйрӑмах „йулашки" вӑхӑтра, йертсе пырас ӗçе лартни—пирӗн парти массӑсем çине пит пысӑк шанчӑк хунине, вӑл массӑсемпе уйӑрӑлми çыхӑнса тӑнине кӑтартать, социалисӑм условийӗнче çынсем ӳссе аталанса пынине, парти çынсене ӳстерессишӗн, воспитани парассишӗн пит хытӑ тӑрӑшнине кӑтартса тӑрать.

Пирӗн çӗршывра çынсене пысӑкрах ӗçе лартассине никӑçан та суккӑрла тумаст. Парти йаланах çынсене шанса куллен ӗçре çирӗппӗн тӗрӗслесе пынӑ. Ленин партийӗ: çынсене тӗрӗслесси, хушнӑ ӗçе пурнӑçа кӗртнине тӗрӗслесси—йертсе пырас ӗçре чи вырӑнта тӑрать, тесе вӗрентнӗ. Социалисӑм çӗршывӗ капиталисӑмла йӗритавралӑхра пурӑнать,— çавӑнпа ӗнтӗ çынсене ӗçре йаланах çирӗппӗн тӗрӗслени пушшех те кирлӗ. Револљуцилӗ сыхлӑхлӑ куç йаланах çивӗч пулмала. Анчах бољшевикла сыхлӑх вӑл нихӑçан йенчен те хӑравçӑла иккеленӳпе пӗр мар.

Тӗп Комитетӑн йанвар уйӑхӗнче пулнӑ Пленумӗ парти организацисене: пирӗн ретсенче шанманлӑхпа ытлашши иккеленӳ сарни вӑл тӑшмансемшӗн çеç кирлӗ, тесе çӗнӗрен ӑнлантарса пачӗ. Партин пытаннӑ тӑшманӗсем, карйериссем—сыхлӑх çинче спекуљаци тӑвакансем, нумайрах çынсене вараласа тесе çупакан тӗрлӗрен ирсӗрсем нумай тӳрӗ коммуниссем çине елек тийенӗ. Вӗсем хӑйсене çапассинчен пӑрӑнса йулма, партипе государствӑ аппарачӗн йӗркелӗ ӗçӗсене пӑсма, çынсене вараласшӑн. Сӑмахран, Кийев облӑçӗнчи Черкасс районӗнче Бесчинский текен çын нумай вӑхӑт хушши пӗтӗм парторганизацие тапӑнса пурӑннӑ. Вӑл партин тата государствӑн тӗрлӗ органӗсене хӗрӗх ытла елеклӗ зайавленисем çырса панӑ, районри пур коммуниссене те тӑшмансемпе çыхӑну тытнӑ тесе айӑпланӑ. Вӑл, тепӗр Петух хушаматлӑ „коммунистпа" пӗрле, парти членӗсен пӗр ушкӑнне тӳрӗ çынсем çине елеклеме йавӑçтарнӑ. Бесчинскине елекленӗшӗн совет сучӗ хаљ ӗнтӗ айӑплать.

Партийӗ хирӗçле çынсем нумай организацисенче ытлашши иккеленӳлӗ лару-тӑру туса хунӑ,—çавна сирсе пӑрахасси, совет çыннисем çине шанассине çирӗплетесси—партин кашни организацийӗн чи паха задачӗ пулса тӑрать. Кирек кама та шанмала мар текен теорипе практикӑна сарни тӑшманшӑн анчах кирлӗ. Çынна çын експлоатацилессине пӗтернӗ, ӗçсӗрлӗхе çуклӑха, çын хӑй çеç пуйасшӑн çуннине пӗтернӗ совет халӑхӗ,—вӑл чи тӳрӗ халӑх. Усал тӑшмансене—фашисла разведкӑсен сутӑнчӑклӑ агенчӗсене, партипе совет аппаратне хӗсӗнсе кӗнӗскерсене, вунпар мӗлйун тӳрӗ çынсем кураймаççӗ, ылханаççӗ, çав усал тӑшмансене социалисӑмлӑ государствӑн строителствинче кулен-кун пит пысӑк творчествӑлӑ вӑй-хӑват хурса ӗçлекен пӗтӗм совет халӑхӗ кураймасть, ылханать.

Социалисӑм строителствинче рйадовой çынсем пулнисене йертсе пырас ӗçе çӗнӗрен те çӗнӗрен лартни пит пысӑккӑн пулса пырать. Çӗнӗ руководителсем, вӗсем çине партипе халӑх хунӑ аслӑ шанчӑка тивӗçлӗ пулнине ӗçре кӑтартаççӗ. Партипе совет правителстви рйадовой работниксене паттӑрла рейссем тума, ниме шелленмесӗр ӗçлеме, чи ответлӑ заданисене пурнӑçа кӗртме путӗвкӑсем панӑ. Çавӑн пек чухне çынсем улталаман, партипе правителствӑ хунӑ шанчӑка тивӗçлӗ пулнине кӑтартнӑ. Çапла Совет Сойузӗн Геройӗсен йачӗсене пурте пӗлсе тӑракан пулчӗç, çапла социалисӑмла ӗçри пит нумай паттӑрсен йачӗсене пӗтӗм çӗршыв пӗлсе тӑракан пулчӗ.

Çынна пӗр-пӗр ӗçе уйӑрса лартнипех сахал-ха. Ӑна тата вӑхӑтра пулӑшас пулать, вӑхӑтра канаш парас пулать, йӑнӑшсем тӑвасран вӑхӑтра асӑрхаттарас пулать, çынсем çине çапла бољшевикла пӑхни çеç руководителе пӗр йенчен тепӗр йенне кайса çапӑнасран, обывателле ниме пӑхмасӑр шаннӑ çӗртенех—ниме пӑхмасӑр шанманни тата шанчӑксӑра кӑларни пуласран сыхлама май парать. Сӑмахран, партин Йарослављ обкомӗ, унӑн секретарӗ пулнӑ Зимин çынсене çавӑн пек ниме пӑхмасӑр шанчӑксӑра кӑларас çул çине тӑнӑ.

Иртнӗ кунсенче „Правда" Йарослављ обкомӗ кадрсене мӗнле „йертсе пынинэ" кӑтартакан тӑрлавсӑр фактсем çинчен çырса пӗлтернӗччӗ. Йарослављ облӑçӗнче пысӑк машинӑ-трактор станцине йертсе пыма колхоз председателне Краснова йулташа уйӑрса лартнӑ пулнӑ. Краснов йулташа никам та пулӑшман, никам та йертсе пыман, вара ӑна обком МТС хуçалӑхне йертсе пырас ӗçри йӑнӑшсемшӗн тесе тулласа пӑрахнӑ. Çак тӗксӗм факт—çӗнӗ кадрсене пулӑшусӑр хӑваракан, вӗсене йертсе пыман руководителсемшӗн, çынсене сӑнаса вӗренмен, ӗçре тӗрӗслемен, кайран вара вӗсене ниме пӑхмасӑр шанчӑксӑра кӑларакан çынсемшӗн сигнал пулса тӑмала.

Кадрсене бољшевикла воспитани пама работниксене тӗплӗн вӗренмеле, паллах, анкета тӑрӑх çеç мар, ӗçре вӗренмеле; вӗсене воспитани пама йӑнӑшсене вӑхӑтра хыттӑн критиклени те, йулташла ӑшшӑн пулӑшни те, вӗрентни те кирлӗ. Çавӑн пек йертсе пырассин тӗслӗхсене пире Сталинла Тӗп Комитет куллен кунах кӑтартса пырать. Çынсене йертсе пырасси: кадрсене вӗрентсе ӳстерсе пырасси—çынсене кашни утӑма мӗнле йарса пусмаллине кӑтартса тӑрассине пӗлтермест, вӗсем вырӑнне ӗçлесе вӗсене хыçа хӑвармаллине пушшех те пӗлтермест, мӗншӗн тесен ун пек мелсем çӗнӗ кадрсене ӳсме кансӗрлеççӗ, апла тӑк, партин пысӑк интересӗсене сийен тӑваççӗ. Çынна шан, çав вӑхӑтрах тӗрӗслесе пыр, вӑхӑтра пулӑшу пар, пуçарува хавхалантар—çакӑ пулать бољшевикла воспитанин тӗрӗс çулӗ.

Ытлашши иккеленӳве сирсе пӑрахмала—çакӑ вӑл, чи малтан, елеклесе пӑрахнӑ çынсене тасайа кӑлармаллине, вӗсене социалисӑм строителствине активлӑн, пӗтӗм хӑватпа хутшӑнма пулӑшмаллине пӗлтерет. Ку тӗлӗшпе пичетӗн пысӑк ӗç тумала. Анчах, шел те, ПСК(б)П Тӗп Комитет Пленумӗ тӳррӗмӗн панӑ хушува хаçатсем нумайӗшӗ ӑнланса илмен-ха, вӗсем нумайӗшӗ ӑна пурнӑçа кӗртмеççӗ-ха. Нумай редакторсемшӗн хӑйсен мундирӗ таса пулни парти хушувӗсене тӳррӗн пурнӑçа кӗртнинчен маларах пулас! Ытлашши иккеленӳлӗхе тата шанманлӑха сирсе пӑрахасси—вӑл ӗнтӗ партирен тӗрӗс мар кӑларнӑ пулнӑ, халӗ партийе кайала илнӗ тӳрӗ коммуниссене активлӑ ӗçе хутшӑнтарассине пӗлтерет.

Çав задачӑна пурнӑçа кӗртес тӗлӗшпе Ленинградри хӑшпӗр пуçламӑш парторганизацисем пример кӑтартаççӗ. Киров йачӗпе тӑракан заводра Капустин коммуниса елеклесе тӑкнӑ пулнӑ. Ун çумне сӑтӑрçӑ йарлӑкне çыпӑçтарнӑ, политикӑ тӗлӗшпе шанчӑксӑр çын, тенӗ. Ӑна айӑпланисем пӗтӗмпех суйа пулнӑ. Капустин йулташа партийе кайала илнӗ те ӑна парти историне вӗренекен кружока йертсе пыма хушнӑ. Вӑл кружок хаљ—заводра чи лайӑх кружоксенчен пӗри. Капустин йулташа партийе кайала илнӗ хыççӑн та ӑна шанчӑксӑра кӑларма хӑтланнӑ пӑшӑлтисемпе елекçӗсем тупӑннӑ. Завод руководителӗсем, Капустин йулташа, çавӑн пек çӗнӗрен елекленине пӑхмасӑр, турбинӑ цех начаљникӗн заместителне лартнӑ. Çав тӳрӗ работник йертсе пынипе цехра ӗç чылайах лайӑхланнӑ. Елеклесе пӑрахнӑ çын тӗлӗшпе йӑнӑша пӗтӗмпех тӳрлетнин примерӗ çакӑ пулать те ӗнтӗ.

Çынна шан тата тӗрӗсле!—çакӑн пек бољшевикла йертсе пырассин саккунӗ. Çӳлтен канцељарилле майпа тӗрӗслени мар, ӗçре тӗрӗслени кирлӗ. Калӑпӑр, партин облаçри комитечӗ райкомӑн тата унӑн секретарӗн ӗçӗсене тӗрӗслет пулсан, вырӑнта тӗпчесе вӗренсе тӗрӗслемеле. „Хушнӑ ӗçсене тунине тӗрӗслесси, вӑл çавсене канцељарире анчах тӗрӗслессине тата формаљнӑй отчотсем тӑрӑх анчах тӗрӗслессине пӗлтермест, пуринчен малтан вӗсене ӗç вырӑнӗнче, чӑннипе пурнӑçа кӗртнин резуљтачӗсем тӑрӑх тӗрӗслессине пӗлтерет" (Сталин). Çавӑн пек тӗрӗслени работнике чухласа илме, унӑн чӑннипе пур пахалӑхӗсене палӑртма май парать.

„Анчах çӳлтен тӗрӗслени вӑл тӗрӗслессин пӗтӗм ӗçӗ пулмасть-ха. Тата тепӗр тӗрлӗ тӗрӗслӳ, айалтан тӗрӗслесси пур, ун чухне руководителсене массӑсем, вӗсем йертсе пынипе ӗçлекенсем тӗрӗслеççӗ, вӗсен йӑнӑшӗсене палӑртаççӗ, йӑнӑшсене тӳрлетмели çулсене кӑтартса параççӗ. Çавӑн йышши тӗрӗслӳ вӑл çынсене чӑннипех тӗрӗслемели чи паха майсенчен пӗри пулса тӑрать" (Сталин).

Работниксене шанмала, çав вӑхӑтрах вӗсене вӗрентмеле, тӗрӗслемелле,—кадрсене воспитани памалли бољшевикла, сталинла стиљ çавӑнта палӑрса тӑрать. Çынсене йертсе пырас ӗçре çав условисене пӑсни—партин пысӑк интересӗсене, халӑхӑн интересӗсене пӑсни пулать.

(„Правда").

—o—o—

Маркспа Енгелс искусствӑ çинчен каланисен сборникӗ

МУСКАВ, февралӗн 8-мӗш. (ТАСС). „Искусствӑ" Государствӑ издателстви Карл Маркспа Фридрих Енгелс искусствӑ çинчен каланисен пысӑк сборникне кӑларнӑ. Кӗнеке çине, унӑн пысӑккӑшӗ 48 пичетлӗ листана çитет, Маркспа Енгелсӑн пичетлесе кӑларнӑ произведенисенче искусствӑ çинчен каланисене пӗтӗмпех кӗртнӗ. Кунта марксисӑм никӗсне хываканисен произведенисен сыпӑкӗсене, вӗсен тӗрлӗ çынсем патне çырнӑ çырувӗсене (тата вӗсенчен хашпӗр татӑкӗсене) кӗртнӗ.

Сывлӑш-Çар Академинчи коммуниссен пухуӗ

МУСКАВ, февралӗн 9-ш. (ТАСС). Жуковский йачӗпе тӑракан Ленин орденлӗ Сывлӑш-Çар Академинчи коммуниссем ПСК(б)П Тӗпкомӗн Пленумӗ йышӑннӑ решенисене тата парти комиççин ӗçӗ çинчен тунӑ отчотлӑ доклада икӗ кун хушши политикӑлӑ пысӑк активлӑхпа сӳтсе-йавнӑ. Тухса каласакансем Пленум йышӑннӑ решенисем парти организацисене халиччен тунӑ йӑнӑшсене татӑклӑнах йусама мобилизацилес ӗçре питӗ пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнине пӗр шухӑшлӑ пулса паллӑ тунӑ.

Академири коммуниссем парти комиççин коммуниссен ӗçӗсене пӑхса тухнӑ чухне тунӑ пӑсӑксемпе йӑнӑшсене уççа палӑртнӑ, парткомиççи партин уйрӑм членӗсене хирӗç тӑратнӑ айӑплусем çине часчасах тӗплӗн пӑхманни çинчен кӑтартса панӑ. Академи комиссарӗ—бригадӑ комиссарӗ Смокачев йулташ уйрӑм коммуниссем çинчен тӑракан ыйтусене пӑхса тухнӑ чухне тата сӳтсе-йавнӑ чухне тӗрӗс çул пама хӑтланнӑ, анчах ӗçсене вӗçне çитермен.

Академи политпайӗн начаљник ӗçӗсене туса пыракан Йермолайев йулташ ПСК(б)П Тепкомӗн Пленумӗ решени йышӑннӑ хыççӑн та хӑшпӗр карйериссем лӑпланманни, елекле зайавленисем çырни, тӳрӗ коммуниссем пирки шанманлӑх сарни çинчен калакан чылай фактсем кӑтартса панӑ. ПСК(б)П Тепкомӗн йанварти Пленумӗ кӑтартса панисене пурнӑçа кӗртсе, парти комиççи туна йӑнӑшсене тӳрлетме тытӑннӑ. Хӑйӗн пуçарувӗпе вӑл 15 коммунисӑн ӗçне пӑхса тухнӑ, 9 коммуниса парти ретӗнчех хӑварнӑ, 6 коммуниса партилӗ взысканирен çӑмӑллатнӑ.

Чылай йулташсем Академири комсомол организаци ӗçӗнче чи лайӑх комсомолецсене парти ретне хайулӑнах илме кирлине çине çавӑрӑнса пӑхма çивӗччӗн кӑтартса панӑ.

Академири коммуниссем йышӑннӑ решенисенче парти комиççине ПСК(б)П Тепкомӗн йанварти Пленумӗ йышӑннӑ решенисене тӳррӗн пурнӑçа кӗртсе пырса, ӗçре тунӑ йӑнӑшсене кирлӗ пек тӳрлетме тытӑнма хушаççӗ.

Парти пухувӗ вӑрттӑн сасӑласа 7 çынтан парти комиççине суйланӑ.

Халӑхсен çулпуçӗ Сталин йулташ патне пысӑк çӗкленӳпе саламлӑ çыру йама йышӑннӑ.

—●—

Чи лайӑх çынсем партине кӗреççӗ

БАКУ, февралӗн 8-мӗш. (ТАСС). Сталин йачӗпе тӑракан нефт ӗçлесе кӑларакан Совет Сойузӗнчи чи пысӑк заводри парти организацине чи лайӑх çынсем партине кӗреççӗ. 15 çул производствӑра ӗçлекен, 3-мӗш №-лӗ цех сгонщикне стахановец Сидоров йулташа парти кандидатне илнӗ. Сидоров йулташ пропагандис, социалисӑмлӑ ӗçӗн маçтӑрӗсен курсӗнче вӗренет. Парти кандидатне инженер, активлӑ общественник Будайан йулташа илнӗ. Вӑл агитаторсен семинарне йертсе пырать. Парти кандидатне активлӑ общественницӑна Земскайа йулташа илнӗ.

Сочувствуйушчисен ушкӑнне производствӑра 25 çул ӗçлекен цех маçтӑрне Али Алескерова илнӗ.

—●—

ТАСС пӗлтерни

Кунта илнӗ хыпарсем тӑрӑх, ССР Сойузӗн Румынири повереннӑйӗ Бутенко йулташ, февралӗн 6-мӗшӗнче, каçхине 7 сехетре, полпредствӑран хӑйӗн хватерне кайма тухнӑ та çухалнӑ. Вӑл мӗнле çухалнине халӗ те палӑртман. Унтанпа Бутенко йулташ килне те, полпредствӑна та таврӑнман. ССР Сойузӗн Румынири полпредстви çаван çинчен Румынин йутçӗршыв ӗçӗсен министерствине пӗлтерсе, çаван пек халиччен нихçан пулман киревсӗр ӗç пирки протест панӑ.

Çакӑ уççӑнах паллӑ—Бутенко йулташ çине политикӑла преступлени тӑвакансем тапӑннӑ, çав политикӑла преступленине фашисла организаци йе фашисла парти организацилӗнӗ.

Совет правителстви ССР Сойузӗн Бухарестри полпредствине Румынин йутçӗршыв ӗçӗсен министерствине нотӑ парса хыттӑн протестлеме, ӗçе халех тӗпчесе тухма, айӑплисене чӑннипех тупмали ӗççене тума тата айӑплисене хытӑ наказани пама ыйтма хушнӑ.

(ТАСС).



Ӳкерчӗк çинче: И. В. Сталин йулташ колхозник-ударниксен Пӗтӗм Сойузри II-мӗш съесӗн комиссинче, сӑмах калать. 1935 çул. Н. Петров фото-ӳкерчӗкӗ (Фотоискусствӑн Пӗтӗм Сойузри I-мӗш выставки).

Сойузфото репродукцийӗ.

Пӑрçӗмренсемпе тата самољотсемпе Папанин лагерӗ патне

Гренланди тинӗсӗнчи пысӑк мар пӑр татакӗ Гренланди çыранӗнчен инçе мар куçса пырать. Çав пӑр мӗнле куçса пынине хаљ пӗтӗм тӗнчипе асӑрхаса тӑраççӗ. Унта, çав пӑр çинче, „Çурçӗр полђусӗ" станци. Хамӑрӑн тӑван çӗршывӑн паттӑр ывӑлӗсем—Папанин, Кренкелђ, Ширшов тата Федоров йулташсем, калама çук йӑвар условисене пӑхмасӑр, ӑслӑлӑх ӗçӗсене туса пыраççӗ, вӗсем кашни ултӑ сехетренех хӑйсен сӑнавӗсене Пысӑк Çӗр çине пӗлтерсе тӑраççӗ.

Кашни çулах Арктикӑран Гренланди тинӗсне виçӗ йухӑмпа пӗр мӗлйун тваткӑл километра йахӑн пӑр йухса пырать. Пӗрремӗш йухӑмӗ—хӗвеланӑçри, ку йухӑмпа Гренланди çыранӗнчи пӑрсем пыраççӗ. Иккӗмӗш йухӑм—вӑтаçӗрти, ку йухӑмпа Вӑтаçӗрти Арктикӑри пӑрсем пыраççӗ. Виççӗмӗш йухӑм—хӗвелтухӑçӗнчи, çак йухӑмпа Лаптевсен тинӗсӗнчи тата Карск тинӗсӗнчи пӑрсем пыраççӗ. Пӗрремӗшпе виççӗмӗш йухӑмри пӑрсем ӑшӑ шыв йухӑмне (Гољфштрем) пула хӑвӑрт вакланаççӗ.

Вӑтаçӗрти йухӑмри пӑрсем кайарахпа вакланаççӗ,—Папанин ушкӑнӗ вырнаçнӑ пӑр çав йухӑмра пырать.

Гренланди тинӗсӗнче йанварӗн 25-мӗшӗнче пуçланнӑ пит вӑйлӑ çил-тӑвӑл хыççӑн Папанин ушкӑнӗ вырнаçна пӑр вакланнӑ. Çанталӑк сивӗтсен пӑр çурӑкӗсем тӗлӗнче шыв шӑннӑ. Папанин ушкӑнӗн лару-тӑраве лайӑхланнӑ. Февралӗн 9-мӗшӗнче Папанин ушкӑнӗ вырнаçнӑ пӑр çурçӗр широтин 72 градус та 6 минутӗнче, хӗвеланӑç долготин 19 градус та 38 минутӗнче пулнӑ. Çав тӗл вӑл Гренланди çыранӗнчен (Гренланди тӗнчери пит пысӑк утрав, Дани аллинче тӑрать) 75 километртра, Йан-Майен текен пысӑк мар утравран 250 километртра. Йан-Майен утрав Папанин ушкӑнне пӑр çинчен илсе тухмали ӗççен центрӗ пулса тӑрать пулмала.

Папанин ушкӑнне пӑр çинчен илсе тухакан експедицийе тавата карап хутшӑнаççӗ: „Мурманец", „Таймыр", „Мурман" тата „Йермак".

„Çурçӗр полђусӗ" станцинчен чи çывӑхра пысӑк мар карап „Мурманец". Анчах вӑл, пӑрсем чӑрмантарнине пула, Папанин лагерӗ патне тӳрӗ çулпа кайайман. Çавӑн хыççӑн „Мурманец" капитанӗ кӑнтӑр йенеле çул тытма, Йан—Майен утрав тавра çаврӑнма, унта пӑрсем ытла пит чӑрмантарманнипе усӑ курса, Папанин ушкӑнӗ патне кайма шут тунӑ. Февралӗн 9-мӗшӗнче „Мурманец" çурçӗр широтин 70 градус та 6 минутӗнче, хӗвеланӑç долготин 9 градусӗнче пулнӑ.

„Таймыр" тата „Мурман" пӑрçӗмренсем тинӗс тӑрӑх хӑвӑрт малала каяççӗ. „Таймыр" ӗнтӗ Гренланди тинесӗнчи пӑрсен хӗррине çитнӗ.

Папанин лагерӗ патне кайма Ленинградран „Йермак" пӑрçӗмрен тухать. Вӑл тӗнчери чи вӑйлӑ пӑрçӗмренсенчен пӗри. „Йермакӑн" Ленинградран Йан-Майен утравӗ патне çитме 8 талӑка йахӑн каймала. „Йермак" пӑрçӗмрен çинче експедицири пӗтӗм вӑйсен руководителе О. Й. Шмидт кайать.

Папанин ушкӑнне пӑр çинчен илсе тухма кайнӑ карапсем çинче „Мурманецсӑр" пуçне, самољотсем пур. Пӑр çинче хӗл каçнӑ тавата паттӑра самољотсемпе илсе тухма май килмесен (анса ларма йурахлӑ пысӑк пӑр çук пулсан), вара самољотсемпе разведкӑ тума тата лагере кирлӗ йапаласем илсе кайса пама усӑ кураççӗ.

Папанин лагерӗ тӗлӗнче февраљ уйӑхӗнче хӗвел курӑнма пуçлать. Хӗвел çутатни ытларах та ытларах пулса пырать. Çавӑ ӗнтӗ самољотсемпе карапсен ӗçне нумай çӑмӑллатать.

(ТАСС).

„Йермак" тинӗсе тухнӑ

Февралӗн 9-мӗшӗнче, „Йермак" çине тийесе пӗтернӗ хыççӑн, гаваљри кӑмрӑк тийемели вырӑнта митинг пулнӑ. О. Й. Шмидт кӗскен сӑмах тухса каланӑ. Вӑл Балтикӑри краснофлотецсене „Йермак" пӑрçӗмрен çине кӑмрӑк лайӑх тийенӗшӗн тата експедицине хатӗрленме пулӑшнӑшӑн тавтунӑ.

11 сехет те 50 минутра „Йермак" гаваљрен Фински залива тухнӑ.

(ТАСС).

—o—

Прожекторсен çутипе

„ТАЙМЫР", 9-II (ТАСС-ӑн йатарласа кайнӑ корресподенчӗ). Гренланди тинӗсне кайатпӑр. Хӗвеланӑç долготин 5 градусӗнчен иртрӗмӗр ӗнтӗ. Прожекторсен çутипе, талкишпех шӑннӑ çӳхе пӑра çӗмӗрсе, хӑвӑрттӑн малала кайатпӑр.

Пайан „Мурманецпа" çыхӑнтӑмӑр.

„Таймыр" çинчи експедици руководителӗ ОСТАЉЦЕВ.

—o—

Дипломати корпусӗ пӑшӑрханни

„СССР В-6" дирижабљ ӳксе çӗмӗрӗлнӗ май, Йутçӗршыв ӗçӗсен Халӑх Комиссарӗ Литвинов йулташ йачӗпе пӑшӑрханса çырнисем килнӗ: Англи посолӗнчен лорд Чиљстонран, Швеци посланникӗнчен барон Йулленшерран, Дани посланникӗнчен г. Бољт-Йонгенсенран, Чехословаки посланникӗнчен г. Филлингертан, Америкӑри Пӗрлӗшӳлӗ Штатсен поверенӑйӗнчен г. Гендерсонран, Греци поверенӑйӗнчен г. Николопдлосран, çавӑн пекех тата Францин ССР Сойузӗнчи посолӗнчен г. Кулондртан.

Германин чрезвычайнӑй посланникӗ тата полномочнӑй министрӗ граф Шуленбург, Норвегин чрезвычайнӑй посланникӗ тата полномочнӑй министрӗ г. Урби Йутçӗршыв ӗçӗсен Халӑх Комиссарӗн заместителӗ Потомкин йулташ патне пырса, „СССР В-6" дирижабљ трагедиле пӗтнишӗн пӑшӑрханни çинчен пӗлтернӗ.

(ТАСС).

„СССР В-6" ДИРИЖАБЛЬ ÇИНЧЕ ВИЛНĔ ВĔÇЕВÇĔСЕН БИОГРАФИЙĔСЕМ

Николай Семенович Гудованцев

Дирижабльĕн пĕрремĕш командирĕ

Дирижабльсен чаплă водителĕ Николай Семенович Гудованцев 1909 çулта рабочи семйинче Томск чукунçул çинчи Чулымскайа станцинче çуралнă.

Вăл вунпилĕк çултах хăй ĕçлесе тăранса пурăнма, кровельщик патĕнче подручнăй пулса ĕçлеме пуçланă. Çав çултах комсомола кĕнĕ.

Пурне те вĕренме тăрăшаканскер-не, пултарулă та хастарлă çамрăка авиаци интереслентернĕ. Комсомол йенĕпе ăна Омскри индустри техникумне вĕренме йанă, унта вăл аэроçунасем тата глиссерсем тунă çĕрте хăйĕн пултарулăхне кăтартнă. Техникумран вĕренсе тухнă хыççăн Мускаври аэромеханикăлă аслă училищăра (кайарахпа вăл училищĕран авиаци институчĕ тунă) вĕреннĕ. Хастарлă та тимлĕ, сахра-хутра çеç тĕл пулакан пултарулăхлă, Николай Гудованцев хăйĕн специальнăçне дирижабльсем тăвассинче тупнă. 1935 çулта вăл дирижабль строителствин вĕренӳ комбинатĕнчен лайăх вĕренсе тухса, дирижабль тăвакан инженер-техник йатне илнĕ.

1930 çулта „Комсомольская правда" йатлă дирижабльĕн учльочĕ пулнă. 1932 çулта Гудованцев „СССР-8" дирижабльĕн командирĕ, 1938 çулхи йанварте ăна дирижабльсен ескадрин командирĕ тунă. Вăл дирижабльсен пысăк вĕçевĕсенче пуринче те пулнă. Н. С. Гудованцев сывлăшра икĕ пин сехет ытла пулнă, çав шутран 200 сехете ытла çĕрлехи тĕттĕм вĕçевсенче пулнă.

Хăйĕн ĕçне çав тери çирĕп тытакан пилот аварисем пулнине астумаст. Усă кăмăллă тата хăйне мăнна хумапскер, вăл темле паттăрла ĕçсем тума та пултарнă. 1935 çулхи октябĕрте Донбаса дирижабльпе тата дирижабль çинчи çынсене çăлас тĕлĕшпе хăйĕн пурнăçне шеллемесĕр кĕрешнĕшĕн Гудованцева Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ парса наградăланă. Николай Гудованцев ĕçленĕ пур комсомол организацисенче те ăна ПСÇЛКС активлă членĕ тесе шутлана.

Хăйĕн карапĕпе хăйулă та паттăр папанинцăсене пăр çинчен илсе тухас çĕрге усă курма Гудованцев пысăк хаваслăхпа сĕнӳ панă. Анчах кĕтмен инкек нимĕнрен хăраман талантлă командирăн, тăван çĕршыва чĕререн йуратса ĕçлекен комсомолецăн Николай Гудованцевăн пурнăçне татрĕ.

Иван Василйевич Паньков

Карапăн иккĕмĕш командирĕ

Иван Василйевич Паньков мордва хресченĕн ывăлĕ. Вăл чухăн семйере çуралнă. Вăл чаплă пурнăç кунçулне иртернĕ. Çураласса 1904 çулта Куйбышев облаçĕнчи Ставрополь районĕнчи Тури Сенгелей йалĕнче çуралнă. 18 çула çитиччен Паньков хăйĕн тăванĕсемпе пĕрле хирте ĕçленĕ. 1922 çулта вăл Иваново облаçĕнчи Йаковлевскри пир-авăр фабрикин смазчик пулса ĕçлеме кĕнĕ. Унтах 1924 çулта комсомола, 1926 çулта ПСК(б)П ретне кĕнĕ.

Хастарлă тата пултарулă çамрăк пĕлӳ илме хытăн тăрăшнă. Темиçе çул хушши льотчик пулма ĕмĕтленнĕ вăл. 1926 çулта рабфакран вĕренсе тухнă хыççăн, вăл Мускаври техникăлă аслă училищăн аеромеханически факультетне (реорганизациленĕ хыççăн ăна авиаци институчĕн сывлăшра вĕçме вĕрентекен отделенийĕ туса хунă) вĕренме кĕнĕ. 1932 çулта, вĕренсе пынă вăхăтрах, малтан карап командирĕн помошникĕ, кайрантарахпа командир пулса ĕçленĕ. Ун çинчен часах ĕçе пĕлекен, хăйулă, йалавах çирĕп те йаланах шиксĕр карап командирĕ, тесе чап саралăт. Чи лайăх вĕçевсемшĕн Иван Василйевича тав тунă тата премисем панă.

Тимлĕхлĕ, пархатарлă та йуратмала çын, чаплăран та чаплă йулташ тата командир—хăйне пĕлекен кашни çынăн чĕринчех вăл ĕмĕрлĕхех çакан пек йулĕ.

Сергей Владимирович Демин

Карап командирĕн пĕрремĕш помошникĕ

Сергей Владимирович Демин дирижабль строителствин вĕренӳ комбинатĕнче ӳссе çитĕннĕ. Комбината вăл 1929 çулта рабфакран вĕренсе тухсан кĕнĕ. Унччен комсомол ĕçĕнче пулнă, пионер отрйачĕсене йертсе пынă, Мускаври Бауман районĕнче ашшĕ-амăшсĕр ачасем çапкаланса çӳрессине хирĕç кĕрешнĕ.

1927 çулта вăл ПСК(б)П ретне кĕнĕ. Демин йулташ 1934 çулта институтран вĕренсе тухнă, анчах кунччен малтан икĕ çул кайарах ăна дирижабльсенчен пĕрине йертсе пыма шанна. Хăйулă, тӳрĕ те çивĕч, пуçарулă çын, вăл вĕçев ĕçне йуратнă, пуринчен ытла çĕнĕ машинăсене сăнаса пăхмалли вĕçевсене йуратнă—çавăн пек аттестаци парат Демина командовани.

Демин йулташ хăйне вĕçев ĕçĕн çав тери пултарулă маçтăрĕ пулнине çеç кăтартман, тата вăл паллă изобретател те пулнă. Унăн дирижабльсене сывлăша хăпартмали тата вĕсене антарса лартмали, буксирламали механизаци пройекчĕсем, темиçе тĕрлĕ рационализаторла сĕнӳвĕсем практикăра пурнăçа ăнăçлăн кĕрсе пынă.

Владимир Георгийевич Льангузов

Дирижабль командирĕн иккĕмĕш помошникĕ

„СССР-В 6" дирижабль командирĕн иккĕмĕш помошникĕ Владимир Георгийевич Льангузов, дирижабль строителствин вĕренӳ комбинатĕнчен вĕренсе тухса, 25 çултах инженер-механик йатне илнĕ.

Вăл рабочи çемйинчен тухнă, çамрăклах ĕçлесе пурăнма тытăннă. 15 çула çитсен комсомола кĕнĕ. Тир-сăран заводĕнче ученик шучĕпе ĕçленĕскер, Владимир Льангузов пилотаж искусствине тимлĕн те çине тăрса алла çавăрса илнĕ. Вăл вĕçнĕ чухне нихăçан та ирĕксĕр çĕре анса лартман тата нихăçан та аварисем туман. Вăл хăйĕн ĕçне çав тери йуратнă, хăйĕн ытарайми паха çĕршывĕн шанчăклă ывăлĕ, ленинла комсомолăн шанчăклă ывăлĕ пулнă май, ответлă заданисене пурнăçа кĕртме йаланах хатĕр пулас тесе, йаланах хăйĕн техникăла пĕлӳне ӳстерме тăрăшнă.

Тарас Сергейевич Кулагин

Карап командирĕн виççĕмĕш помошникĕ

Тарас Сергейевич Кулагин 1911 çулта Дон-çи Ростовра çуралнă.

Кулагин йулташăн калама çук чаплă пахалăхĕсем—дисциплинăлăх тата организаторла пултарулăх—çамрăк ача чухнех палăрнă.

14 çулта чухне, Классон йачĕпе таракан електростанцин механически маçтерскойĕнче подручнай пулса ĕçленĕ, вăхăтрах вăл ПСÇЛКС комитечĕн культпроп пайĕн пуçлахĕ пулнă.

Кулагин йулташ 1935 çулта дирижабль строителствин вĕренӳ комбинатĕнчен инженер-механик специальнăçпа вĕренсе тухнă. Карап механикĕ, унтан карап инженерĕ пулса ĕçленĕ. Вĕреннĕ вăхăтра 1931 çулта партие кĕнĕ. Йуратнă ĕçĕн техникине ăнăçлăн алла çавăрса илсе, вăл парти пурнăçне активлăн хутшăнса ĕçленĕ, вĕçев ушкăнĕн парторганизаторĕ пулнă.

Алексей Александрович Ритсланд

Карапăн пĕрремĕш штурманĕ

Алексей Александрович Ритсланда тивĕçлипех Союзăн чи лайăх штурманĕ тесе каланă. Çурçĕр польусне кайма организациленĕ историлĕ експедицине вăл „СССР-Н-171" самольот çинче вĕççе хутшăннă. Çак вĕçевшĕн Ритсланд йулташа Ленин орденĕпе наградăланă. 1936 çулта вăл Совет Союзĕн Геройĕпе В. С. Молоковпа пĕрле „СССР-Н-2" самольотпа Арктикăри пысăк вĕçеве хутшăннă. Çак вĕçевшĕн правителства ăна Ĕçлĕх Хĕрлĕ Йалав орденĕпе наградăланă.

Ритсланд йулташ 1904 çулта хресчен семйинче çуралнă. 1922 çулта вăл вăтам шкултан вĕренсе тухат. 1923 çулта кĕркунне Ленинградри артиллери шкулне курсант пулса вĕренме кĕрет. Кунтан 1926 çулта Алексей Александровича льотчик-сăнавçăсен шкулне вĕренме йараççĕ, унтан вĕренсе тухсан ăна 1928 çулта Н-ски авиаескадрилйинче льотчик-сăнавçă пулма уйăрса лартаççĕ.

1929 çулта Ритсланд йулташа авиапаркăн çыхăну начальникĕ тăваççĕ, тепĕр çулне—ескадрилйин електрорадиослужба начальникĕ тăваççĕ. Çак ĕçре Алексей Александрович 1932 çулччен ĕçлет. 1933 çулта вăл Çурçĕр тинĕс çулĕн Тĕп Управленине штурманрадис пулса ĕçлеме кĕрет, кунта—польарти авиацинче — вăл йулашки вăхăтченех ĕçлет.

Калама çук чаплă совет пилочĕн, пирĕн таван çĕршывăн мухтавлă соколĕн—Алексей Ритсландăн йачĕ ăна пĕлекенсемшĕн йаланлăхах асра йулĕ.

Георгий Николайевич Мйачков

Иккĕмĕш штурман

Казак ывăлĕ Георгий Николайевич Мйачков льотчик пулма ĕмĕтленнĕ. Çак тĕллевпе 1925 çулта, çирĕм çулхи çамрăк, пурнăçăн йавăр шкулĕ витĕр тухнăскер, Ленинграда пынă. Анчах льотчиксен шкулне вăл тепĕр çултан тин вĕренме кĕме пултарнă. Вĕренсе пĕтернĕ хыççăн вăл льотчик-инструктор пулса ĕçленĕ. 1933 çулта дирижабль штурманĕ пулса тăнă.

Мйачков йулташ ĕçе пĕлни тата типтерлĕ пулни 1934 çулта „СССР-В 6" дирижабльпе вăрăм вăхăт хушши тунă сăнавлă вĕçеве лайăх хатĕрленсе иртернинче те палăрнă. Çак ĕçшĕн Мйачков йулташа преми пана.

Мйачков йулташ йуратнă ĕçĕшĕн пĕтĕм чунне панă, мĕн çамрăкранпах вăл çав ĕçшĕн тăрăшнă. Хăйĕн тăван çĕршывĕн шанчăклă ывăлĕ пулнă май, вăл ответлă заданине пурнăçа кĕртсе, пострах вилчĕ.

Николай Алексейевич Коньашин

Аслă бортрадист

Николай Коньашин производствăран татăлмасăрах Мускаври сывлăшри ишев шкулĕнче вĕренме пуçланă. Çав вăхăтра вăл (1930 çулта) „Москомстрой" трестăн строителствинче моторист-механик пулса ĕçленĕ.

1932 çулта комсомолец тата ПСК(б)П кандидачĕ Коньашин йулташа шкултан срукчен вĕрентсе кăлараççĕ те, „Комсомольская правда" дирижабль çинче бортмеханик пулса ĕçлеме йараççĕ.

1933 çулта Коньашин йулташ Хĕрлĕ Çара кайат, вăл кунта та хăйĕн специальнăçне малалла ӳстерсе пырат. Хастарлă, тимлĕ, час тавçăрса илме пултаракан çын, пуринчен ытла йăвăр вĕçевсем вăхăтĕнче кирек мĕнле йăвăрлăхран та тухма пултараканскер.—вăхăтсăр вилнĕ большевик Коньашин йулташ çавăн пек çын пулнă ĕнтĕ.

Константин Алексейевич Шмельков

Дирижабльĕн пĕрремĕш бортмеханикĕ

Константин Алексейев Шмельков 1903 çулта Мускавра çуралнă. Вăл 16 çулта чухнех ĕçлеме пуçлат, унтан живопис шкулĕнче 4 çул вĕренет. 1925 çулта Хĕрлĕ Çара кайат.

1930 çулчен Шмельков йулташ ата-пушмак çĕлекен пулса ĕçлет. Унтан „Москвошвей" фабрикĕнче механик, иккĕмĕш автобус паркĕнче шофер пулса ĕçлет. 1932 çулта сывлăшри ишев шкулĕнчен вĕренсе тухнă. Çак вăхăтран пуçласа Константин Алексейевич—дирижабль бортмеханикĕ. Çак ĕç Шмельков йулташăн чăн чăн йуратнă ĕçĕ пулнă. Вăл чи ответлă заданисене те калама çук чаплăн пурнăçа кĕртет. Вăл вĕренӳ çинчен, хăйĕн квалификацине ӳстересси çинчен, инçетри вĕçевсем çинчен ĕмĕтленет.

Çавăнпа та вăл Мурманска, унтан—папанинцăсем патне вĕçесси çинчен панă сĕнӳве хавасланса йышăнат Путсĕр инкек çак рейса унăн йулашки рейсĕ туса хучĕ...

Михаил Василйевич Никитин

Дирижабль бортмеханикĕ

1926 çулччен Михаил Василйевич Никитин хăйĕн тăван йалĕнче—Рйазань кĕперничи Зарейск уйесĕнчи Охотники хуторĕнче йалхуçалăх ĕçĕпе пурăннă.

17 çула çитсен Мускава кайнă, унта вăл пусма-тавар фабрикĕнчи шкула вĕренме кĕнĕ. 1929 çулта комсомол организаци Никитин йулташа вĕçев шкулне вĕренме йанă. Ăна вăл тепĕр виçĕ çултан вĕренсе пĕтернĕ. Çав хушăрах вăл планерисăм шкулне пĕтернĕ, пилот-планерис йатне илнĕ. 1932 çулта Михаил Василйевич бортмеханик пулса ĕçленĕ. Ударлă ĕçлесе пынăшăн ăна темиçе хутчен те премисем панă. 1933—34 çулсенче Хĕрлĕ Çарта. Унта вăл хăйне кăтартулă, дисциплинăлă боец пулнине кăтартнă. Хĕрлĕ Çарта пулнă вăхăтра кĕçĕн авиаспециалиссен шкулĕнчен вĕренсе тухнă.

1935 çултан пуçласа Никитин йулташ каллех дирижабль çинче. Кунта вăл чи лайăх бортмеханиксенчен пĕри пулнă. Хастарлăх, пуçарулăх, хăйулăх—акă ăна палартса тăракан пахалăхсем.

Николай Никитич Кондрашев

Дирижабль бортмеханикĕ

Николай Никитич Кондрашев 1907 çулта Хĕвеланăç облаçĕнчи Издешков районĕнче чукунçул р бочин семйинче çуралнă. Йалти, унтан тата хулари шкултан вĕренсе тухнă хыççăн Мускаври авиатехникумра тата Ленинградри çар техники шкулĕнче вĕренет. 1932 çултан пуçласа Кондрашев йулташ—сывлăш карапĕсен бортмеханикĕ. Николай Никитич хăйĕн обйазăннăçĕсене йĕркелĕн туса пынă, вăл сывлăшра вĕçнĕ çĕрте стахановец шутланнă.

Василий Дмитрийевич Чернов

Дирижабль бортрадисĕ

Василий Дмитрийевич Чернов рейсра пулнисенчен чи çамрăкки. Комсомолец. Вăл 1913 çулта çуралнă. 1931 çулта шкултан вĕренсе тухнă. 1934 çултанпа Чернов йулташ—дирижабльсен ескадрин бортрадисĕ. Хăйĕн обйазаннăçĕсене лайăх туса пынă. Чернов йулташ ĕçлекен дирижабльсенчи радио пĕр чарăнмасăр ĕçленĕ.

Василий Дмитрийевич хăйĕн пĕлӳне хăпартас майпа ывăнмасăр ĕçленĕ, хăйĕн техникăла пĕлӳне ӳстерсе пынă.

Дирижабль ӳксе çĕмĕрлни чаплă çынăн, лайăх йулташăн, талантлă радисăн пурнăçне татрĕ.

Давид Исайевич Градус

Дирижабль çинчи бортсиноптик

20 çулхи пекар Давид Градус 1928 çулта хăйĕн професçине улăштарма шут тытнă. Вăл çар шкулĕнчи метеорологсен курсне вĕренме кĕнĕ. Унта вăл пĕр çул вĕренсенех специалис-метеоролог пулса тăнă. 1933 çулта ăна дирижабльсен портĕнче метеорологи службин начальникĕ тунă.

Лайăх специалис синоптик Градус йулташ активлă общественник пулнă. Вăл çынсем çине тăрăшса та йуратса пăхнă, ăна хăйне те пурте йуратнă.

Аслă ĕççен докуменчĕсем

Хĕрлĕ Çарăн Тĕп архивĕнче историлĕ документсене пухса мĕлйун çурă ытла ĕç йĕркелесе хунă.

Вăрçă вăхăтĕнчи приказсем, тӳррĕн çыхăнтаракан телефонсемпе калаçнисем, оперативлă сводкăсем, разведка тунă хыççăн пĕлтернисем, вăрттăнлатса çырнă телеграммăсем, чăçсене йĕркелесе пĕр çĕртен тепĕр выранна куçарасси çинчен кăтартусем, хĕрлĕ гварди отрйачĕсемпе Хĕрлĕ Çар чăçĕсен личнăй составĕн докуменчĕсем—çаксем пурте пирĕ граждăн вăрçин фрончĕсенче пулнă паттăр кĕрешӳсен иртнĕ кунĕсене аса илтереççĕ.

Халĕ Тĕп архивра пур документсене те пухса çитереймен-ха. Мĕлйуна йахăн ĕç халĕ вырăнсенчи тата ытти архивсенче упранаççĕ.

Вĕсем пурте Тĕп архивăн ĕçне чылайах йăвăрлатаççĕ, савăнпа йатарласа тăвакан сурт строителствине пĕтереччен материалсен çавăн пек пысăк массине архив йышăнма пултараймаст.

Пирĕн умра типтерлĕн çĕлесе хунă ĕçсем. Вĕсене тусанран тата хĕвел çутинчен сыхлакан йатарласа тунă коробкăсене майлаштарса хунă. Мăччана çитех çӳлĕкĕсем çакăнса тăраççĕ, вĕсем çинче документсем упранаççĕ. Вĕсенчен пĕр пайне фронтсем, дивизисем, полксем т. ыт. тăрăх уйăрса хунă. Материалсене çакăн пек майласа хурассине архив 1937 çулта вăйлăн пуçласа йачĕ.

Нумай хисеплĕ документсенче Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарне организацилес ĕçре тата ăна паттăр çапăçусенче йертсе пырас ĕçре пирĕн парти мĕнле пысăк выран йышăнса тăнине, вăл мĕнле йертсе пынине кăтартса панă.

Çĕршер историлĕ документсем Сталин йулташăн граждăн вăрçи фрончĕсенчи ĕçĕсемпе тачă çыхăнса тăраççĕ.

Акă Царицын фронтĕнчи пур чăçсене те Ворошилов йулташ командованине пĕрлештересси çинчен 1918 çулти июлĕн 23-мĕшĕнче Сталин йулташ алпуçса кăларнă приказ: „Малтан пулнă III тата V çарсен халĕ йулнă мĕн пур чаçĕсене, Царицын фронтĕнче пулнă çарăн чаçĕсене тата Морозовскипе Донец округĕсенче пурăнакан халăхсенчен йĕркеленĕ чаçĕсене пĕр ушкăна пĕрлештерес, унăн командуйушчине V çар командуйушчийĕ пулнă Климент Йефремович Ворошилов йулташа уйăрса лартас. Ӳлте асăннă çар чаçĕсене малашне хăйсене „Ворошилов йулташ ушкăнĕ" йатпа чĕнмеле".

Ленинпа Сталин йулташсем алă пуснă историлĕ документсем нумай. Вăл документсен подлинникĕсем уйрăм вырăнсенче упранаççĕ.

Ворошилов, Фрунзе, Киров, Орджоникидзе, Блюхер, Буденный йулташсем тата пирĕн Хĕрлĕ Çарăн ытти мухтавлă полководецĕсем алпусса кăларнă документсем нумай-хисепле тĕл пулаççĕ.

Акă Фрунзе йулташ 1920 çулти нойабĕрĕн 15-мĕшĕнче Мелитополь хулинче алпуснă телеграммă: „Пайан пирĕн чаçсем Севастопола кĕчĕç. Хĕрлĕ полксем хăватлăн çапнипе Кăнтăр-вырăс контрреволюцине татăклăн çĕмĕрсе тăкнă. Ĕшенсе çитнĕ çĕршыв вальли империалисăм тата граждăн вăрçисем вăхăтĕнче пулнă сурансене сыватма тытăнма май усăлат"...

Акă 1922 çулти февралĕн 5-мĕшĕнче Бира (Инçет-Хĕвелтухăç крайĕ) станцинче Блюхер йулташ алпуснă кĕске приказ, вăл тĕплĕн, усăн умри задачăсене кăтартса парат:

„Волочайевкăна илнĕ чухне искусственнă тунă чăрмавсене пĕтерме çакна тума хушатăп:

1. Темиçе чаçрен пухса йĕркеленĕ бригадăн штурмлакан взводсем туса йĕркелемеле, вĕсене штурмлакан колоннăсене пĕрлештермеле, колоннă задачи—тимĕр картасене çĕмĕрсе тухасси.

2. Штурмлакан колоннăсене гранатăсем, хачăсем, кошмасем тата пуртăсем кирлĕ тухăç пĕтĕмĕшлех памалла.

3. Артиллерин май пур таран тимĕр картасене персе çĕмĕрмеле тата витĕр тухса кайма çул тумала".

Йунашар — оперативлă сводка, унта Волочайевкăна илни çинчен каланă.

Документсене сыхласа усранисĕр тата справкăсем панисĕр пуçне,—1937 çулта 16.263 справкă панă пулнă,—Хĕрлĕ Çарăн Тĕп архивĕ историлĕ хаклă документсене тĕпчесе вĕренес тĕлĕшпе те ĕçлет.

Кунта архив материалĕсене фондсем тăрăх майлаштарассине тата ăслăлăхла ăнлантарса çырассине туса пыраççĕ. Кашни фронт тăрăх архивлă историлĕ справкă туса хунă, пур документсем кăтартнă тăрăх вăл справкăсенче вăрçăлă-политикăлă лару-тăру çинчен, çар составĕ тата вăрçă ĕçĕсем çинчен çырса тунă. Çавăн пек справкăсене кашни çар тата дивизи тăрăх та туса хураççĕ.

Архив материалĕсемпе „Граждăн вăрçин историйĕн" 1-мĕш томне çыракансем анлăн усă курнă, вĕсем ытти томсене çырнă чухне те вăл материалсемпе усă кураççĕ.

Архивăн вулав залĕнче уйрăм темăсем тăрăх пухса йĕркеленĕ документсен копийĕсен комплекчĕсем пур: оперативлă, политикăлă ĕçсем тата çарпа економикă çинчен. Кунта çар-вĕренӳ заведенийĕсенче вĕрентекенсем, преподавателсем, ăслăлăх работникĕсем, писателсем ниçта та çапăнса тухман чылай историлĕ хаклă материалсем илеççĕ.

Архивра начальниксен аслă тата чи аслă составĕнчи çар специалисĕсем, граждăн вăрçинчи оперативлă çапăçусенче пулнă çынсем ĕçлеççĕ.

Архив работникĕсем „Граждăн вăрçин оперативлă календарне" çырса хатĕрлеме тытăнчĕç, вăл календар çинче кун хыççăн кун Хĕрлĕ Çарăн 1918—1920 çулсенчи паттăр кĕрешӳлĕ çулне кăтартса пыраççĕ.

(ТАСС).

„Цыгансем" поемăна сценă çинче выльарĕç

ИШЛЕЙ. Тивĕшри вăтам шкулти драмкружок членĕсем вырăс халăхĕн аслă поечĕ А. С. Пушкин вилни 101 çул тултарнă йатпа, февралĕн 3-мĕшĕнче „Цыгансем" йатлă поемине Тивĕш колхоз клубĕн сцени çинче выльаса пачĕç. Уйрăмăнах постановкăра Ан. Петров (учител), Е. Антонова (9-мĕш класра вĕренет) аван выльарĕç. Спектакль курма „Тивеш", „Автан", Ворошилов йачĕпе тăракан колхозри колхозниксем нумай пухăнчĕç. Спектакль колхозниксене питĕ килĕшрĕ. Çав поемăнах драмкружок членĕсем февралĕн 4-мĕшĕнче Пикшик колхозне кайса выльаса пачĕç. Спектакль хыççăн 10-мĕш класра вĕренекен Г. Петров „Смерть поэта", А. Тимофейев „Днепр" сăвăсене тухса каларĕç.

А. Петров.
Т. Сергейев.
И. Павлов.

Колхоза кĕреççĕ

ССР Союзĕн Аслă Совечĕн пĕрремĕш Çессии итогĕсене халăх хушшинче сӳтсе-йавнă май, Тавай районĕнчи йалсенче тӳрĕ ĕçлекен йединоличниксем колхоза кĕме пуçларĕç. Çак кунсенче Тушкильтри „Хĕрлĕ Çар" колхоза 12 хуçалăх, Лачкассинчи „Çăлтăр" колхоза 3 хуçалăх, Киччĕри „1-мĕш Май" колхоза 3 хуçалăх, Сăхатпуçĕнчи „Хĕрлĕ Октябĕр" колхоза 4 хуçалăх, Чутайри „Сталь" колхоза 3 хуçалăх кĕчĕç.

К. Лазарев.

Колхозниксен культурлăхĕ ӳсет

Колхозниксен пурнăçĕ пуйанланса пынă май, вĕсен культурлăхĕ те ӳссе пырат. Колхозниксем Фурмановăн „Чапайев", Островскин „Хурçă йепле хĕрнĕ", Шолоховăн „Уçнă çерем" т. ыт. кĕнекесене вулама тăрăшаççĕ.

Акă Çĕрпӳ районĕнчи „Ĕмĕт" колхозри колхозниксенех илер. Кунти кашни колхозниках библиотекăран художествăлă литературăсем илсе вулат. Анчах библиотекăра Н. Островскин „Хурçă йепле хĕрнĕ", М. Шолоховăн „Уçнă çерем" кĕнекесем пĕрер екземпльар çеç. Колхозниксем асăннă кĕнекесене колхоз правленине пухăнса ушкăнпа вулаççĕ. Унашкал пуçтарăнса пурĕ 4 хут вуланă, унта 80 çынна йавăçтарнă.

Колхоз библиотекинчен Фурмановăн «Чапайев» кĕнекине 45 çын, Шолоховăн „Уçнă çерем" кĕнекине 60 çын илсе вуланă. Библиотекăран тăтăшах кĕнекесем илсе вулакансем 300 çынна йыхăн.

Художествăлă литературăсене çамрăксем те, ваттисем те вуласшăн. 18 çулхи колхозник Д. Алексейев çулталăк хушшинче 35 кĕнеке, А. Степанов 67 кĕнеке илсе вуланă. Акă тата 60 çулхи колхозник З. Данилов хаçатжурналсем вулама ытларах йуратат. Хаçатра партипе правителства руководителĕсен сăмахĕсем тухсан, вăл вĕсене пĕр сиктермесĕр вуласа пырат.

Аслă Совет суйлавĕпе Аслă Советăн пĕрремĕш Çессии пулса иртнĕ хыççăн, колхозниксен политикăла активлăхĕ татах ӳсрĕ. Виççĕмĕш заньатинче Сталин йулташ Сталинский суйлав округĕнче туса каланă сăмаха 250 колхозник вĕренчĕ. Кунсăр пуçне вулавçă-агитаторсем Сталин йулташ сăмахне чукунçул строителствинче ĕçлекенсене ăнлантарса пачĕç.

Колхоз çумĕнче „Ударник" йатлă стена хаçачĕ йĕркелĕ тухса тăрат. Хаçат колхозниксем хушшинче авторитетлă.

И. Лукинский.

Сльотра пулма тивĕç илессишĕн

Тутаркас районĕнчи „Çĕнĕ Йункă" колхоз членĕсем Шăхасан районĕнчи Киров йачĕпе тăракан колхоз членĕсем чĕнсе каланине сӳтсе-йавнă хыççăн, çуракине хатĕрленессипе Шупуçĕнчи „Коммунар" колхозпа социалисăмла ăмăртува тухнă. Вĕсем ăмăртува хутшăнса çуракине хатĕрленес ĕçе чылайах вăйлатса йанă.

Колхозăн кăçалхи çуракинче 242,53 гектар акса хăвармала. Çак участăна акма 109 центнер вăрлăх суртланă, вăл шутран хăшпĕр культурăсене алăпа суйласа тасатни. Çĕре çемçетмелисене пухмали плана ытлашшипех тултарнă.

Колхозниксем йалхуçалăхĕн малта пыракансен республика сльотĕнче пулма тивĕç илессишĕн пĕр-пĕрин хушшинче социалисăмла ăмăрту пуçарса йанă. Кунпа пĕрлех Пĕтĕм Союзри йалхуçалăх выстăвкинче пулма експонат хатĕрлесе зайавкă панă.

Н.

Пленум решенисене сӳтсе-йавассĕ

ÇĔМĔРЛЕ („Чăваш Коммунĕ" корр.). Районти пуçламĕш комсомол организацисенче, коммунистсене партирен кăларнă чухнехи йăнăшсем çинчен, партирен кăларнисен апелляцисем çине формаллă-бюрократла пăхни çинчен тата çав ситменлĕхсене пĕтермели майсем çинчен ПСК(б)Парти Тĕпкомĕн йанварти пленумĕ йышăннă решенийĕсене сӳтсе-йавасси пысăк хастарлăхпа пулса пырать. Комсомолецсем пленум решенисене ырлаççĕ. Çавăнпа пĕрлех вĕсем Тепком решенийĕсенче кăтартнисем пĕтĕмĕшпех комсомол организацине те тивнине паллă тăваççĕ

Февралĕн 6-мĕшĕнче комбинатри комсомол организацин пухувĕ пулса иртрĕ. Пухура ПСК(б)Парти Тĕпкомĕн йанварти пленум решенийĕсем çинчен партком секретарĕ Димитрийев йулташ доклад туса пачĕ. Вăл хăйĕн докладĕнче комбинатри парти организацийĕ коммуниссене партирен кăларас ĕçре пысăк йăнăшсем туса пынине палартрĕ. Пренире тухса калаçакансем комсомол комитечĕн ситменлĕхĕсене, вăл комсомолецсене воспитани парас тĕлĕшпе йурахсăр меслетсемпе ĕçлесе пынине кăтартса пачĕç.

— Комсомол комитечĕ пĕр-пĕр комсомолец ирсĕр ĕç тунă тенине илтсенех, ăна лайăхăн тĕрĕслемесĕрех комсомолран кăларнă. Пирен организацинче комсомолецсен шучĕ вăраххăн ӳссе пырать,—терĕ Мосолов йулташ.

Комсомолтан кăларнисене илсе пăхсан, вĕсенчен çурри ытла пĕр айăпсăр кăларнисем. Акă тĕслĕхсем: Иванов йулташ темиçе çул хушши комбинатри столярнăй цехра ĕçлет. Унчен вăл фабрик-завод шкулĕнче вĕреннĕ. Унăн политикăла тата техникла пĕлĕвĕ çак йулашки 2 çул хушшинче нумай ӳсрĕ. Вăл производствăра ĕçленипе пĕрлех иртнĕ çулта планер шкуленчен вĕренсе тухрĕ. Çак Иванов хăйсен маçтăр айăпĕпе пĕрре брак туса кăларнă та, çавăншăн ăна комсомолтан кăларнă Паллах, ку тĕрĕс мар. Нумайĕшне тата политвĕренӳве йе пухусене çӳременшĕн кăларнă. Акă Гунина йулташа хăйне „пассивлă" тытнă тесе кăларнă.

Халĕ ĕнтĕ комсомол комитечĕ комсомолтан кăларнисене тата тепĕр хут пăхса, тухса тĕрĕс мар кăларнисене комсомол ретĕнчех хăварать. Анчах ку ĕç вăраххăн пулса пырать ха.

Февралĕн 7-мĕшĕнче пулса иртнĕ районти комсомол активĕн пухувĕ те Тĕпком решенийĕсене ырласа, райком тунă йăнăшсем çинчен хытă палартрĕ. Пуху ПСК(б) Парти Тĕпком пленум решенийĕсене пур пуçламĕш организацисенче те сӳтсе-йавма йышăнчĕ.

Х-р. Лисин.
И. Николайев.

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строителстви

Лини хывакан бригадăсем 58-мĕш километра çитрĕç

Февралĕн 10-мĕшĕ тĕлне 44 километр тăрăшшĕ лини хывнă. Халĕ лини хывакан бригадăсем 58-мĕш километрти труба патĕнче чарăнса тăраççĕ. Труба çине клеткă тăвассине февралĕн 10—11-мĕшĕсенче туса çитереççĕ. Клеткă тăвас ĕç пынă вăхатра лини хывакан бригадăсем рельсăсене çирĕплетсе хывма хатĕрлесе хураççĕ.

58-мĕш километрти труба урлă каçсан лини хывма Мăн Çавал кĕперĕ патне çитиччен ĕç çул уçă. Мăн Çавал кĕперĕ патĕнче те нумай тытăнса тăмали çук. Çĕрĕçне туса пĕтерпĕ. Пухса хатĕрленĕ фермăсене вырнаçтарса лартмала. Фермăсене чукунçул тăрăх илсе пыраççĕ.

Çĕр ĕçне тăвасси вĕçленсе пырать. Мăн Çавал кĕперĕпе Шупашкар хушшинче çĕр ĕçне тăвасси ункă кĕперĕ тата тепĕр 2—3 пĕчĕк çыр масенче çеç йулнă. Халĕ вăл участкăсенче хĕрӳлĕ ĕç пырать. Февралĕн 9-мĕшĕнче Çĕрпӳ, Ишлей, Елĕк районĕсенчен çураннисем 399 çын, лашапа ĕçлекенсем 103 çын ĕçленĕ.

Плана 250—300 процент тултараççĕ

ТРАК. Тип Çырма йалсоветĕнчи Димитров йулташ йачĕпе тăракан колхозран Канашпа—Шупашкар хушшинчи чукунçул строителствинче 3 бригадă ĕçлеççĕ. Колхоз председателĕ Н. Филиппов колхозниксене ĕçлеме условисем туса панă. Бригадăсем йаланах нормăсене 250—300 процент тултарса ĕçлеççĕ. Ватамăн шутласан кашни çын кунне 4 кубла метр тăпра чавса турттарать.

Бригадăсенче культмассăлă ĕçе те лайăх йĕркеленĕ. ПСК(б) Парти райкомĕнчен представителсем пырса калаçусем, пухусем туса иртереççĕ. Хаçат-журналсем çителеклĕ. Ĕçлекенсем пушă вăхăта йаланах усăлă ĕçсемпе ирттереççĕ. Кино, спектакль те лартса кăтартаççĕ.

И. Трофимов.

Пысăк тухăçлăхпа ĕçлеççĕ

Мартынкассинчи „Хĕрлĕ хĕвел-тухăç" колхоз членĕсем (Трак р.) чукунçул строителствинче ĕçлемели плана кашнийех 150 процентран кайа мар тултарчĕç. Уйрăмăнах строителствă ĕçĕнче К. Григорийевпа Илйа Матвейев йулташсем пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартса ĕçленине палартмала.

Акă, И. Матвейев йулташ 75 кубла метр çĕр чавса купалас вырăнне 150 кубла метр чавса купаласа плана 200 процент тултарчĕ. К. Григорийев 100 кубла метр çĕр чавса купаланă.

Вĕсен ырă ĕçĕсене хакласа райĕçтăвком преми пачĕ. Матвейев преми шучĕпе коçтум илчĕ.

И. Сергейев.

Кашни кун 80 çын ĕçлет

ÇĔРПӲ. „Ĕмĕт" колхоз членĕсем чукунçул строителствинче активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ. Ку колхозран строителствăра кашни кунах 70—80 çын ĕçлет. Колхоз февралĕн 5-мĕшне плана 200 процент тултарса, преми илме тивĕçлĕ пулчĕ. Колхозниксем халĕ те ĕçлеççĕ.

Н. Окунев.

Рабочком культурлă ĕçе пуtарса пырать

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строителствин 3 участки Канаш хулинче вырăнаçнă. Пирен кунта вăхăта культурлă ирттерме клуб пур. Унта патефон, радио тата музыкă инструменчĕсем. Кашни кунах рабочисем патне хаçат-журналсем килсе тăраççĕ.

Анчах та культурăлă ĕçе организацилесе пыракан çын çук пирки ĕç малала каймасть. Рабочком председателĕ Викторов ку тĕлĕшпе нимĕн те тумасть. Хут купăса та хăйĕн патĕнче тытса усрать. Йĕркелĕ тытман пирки радиона та çĕмĕрсе пăрахнă. Викторов хаçат-журналсене кирлĕ мар çĕре салатса пĕтерет. Вăлах постройкомран 8 машăр йĕлтĕр илнĕ те, вĕсене рабочисене кăтартмасăрах таçта пуçтарса хунă. Культурăлă ĕçе куллен туса пымала.

М. А.

СВБ йачейкисем ĕçлемеççĕ

Тĕне хирĕç пропагандă тăвасси политикăла пысăк задачă пулса тăрать. Апла пулин те тĕне хирĕç кĕрешесси Шăхасан районĕнче çителĕксĕр-ха. Турăсăрсен Сойузĕн районри совечĕ (председател Владимиров) районри СВБ йачейкисене пĕтĕмпех йапăхтарса йанă. Пайанхи куна районĕпе те лайăх ĕçлекен СВБ йачейкисем 8 кăна, вĕсенчен 4-шĕ район центрĕнче.

Йанвар уйăхĕнче ПСК(б)П райкомĕ тĕне хирĕç ĕçлекен агитаторсен 8 кунлăх курсне туса ирттерчĕ. Курсран 22 çын вĕрентсе кăларнă. Анчах вĕсенчен халĕ 4 агитаторĕ çеç йĕркелĕ ĕçлеççĕ. Вĕсем харпăрхăй ĕçлекен Сурăм, Ухман, Хормали, Чулкасси йалĕсенче СВБ кружокĕсем организацилерĕç. Тĕн сийенĕ çинчен калаçусем туса ирттереççĕ.

Турăсăрсен сойузĕн райсовечĕ курсра вĕреннĕ агитаторсемпе усă курма пĕлмест, вĕсене ĕçре пулăшмасть.

С. Соколов.

Кино кăтартмаççĕ

ВĂРМАР. Шăплат йалĕнче кино пулманни çулталăк çитет. Акă ну майăх та пулмасть. Пăртасра Урнар йалĕсенче пит илемлĕ „Партбилет" кинофилмăна кăтартрĕç. Хаçатсем çинче „Петр I", „Ленин в октябре" кино картинăсене чылай çĕртре кăтартнисене çыраççĕ.

Колхозниксемпе йединоличниксем асăннă кинокартинăсене илсе килме ыйтаççĕ.

Трофимов.

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарас умĕн

Хĕрлĕ çар 20 çул тултарать

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ çирĕм çул тултарать. Ĕçлекенсемпе хресченсен пĕрлешнĕ вăйĕ, 1917 çулта капиталисăм пусмăрлăхĕнчен хăтăлса ирĕклĕхе хăй аллине илсе, 1918 çулта хăйĕн тăван çарне организацилерĕ. Ку çар пайанхи куна илсен, никам çĕнтерейми вăй пулса тăрать. Ăна епĕр 1914—16 çулсенче çуралнă çамрăксем, Хĕрлĕ Çара киличчен кĕнекесемпе хаçат-журналсем тăрăх курнă пулсан, пайанхи кун хамăр куçсемпе куратпăр.

Февралĕн 23-мĕшĕнче пирĕн ĕçхалăхĕ хăйĕн Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕн 20-мĕш çулхи уйавне уйавлать. Ку чаплă праçнике пĕтĕм ĕçхалăхĕ пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илет.

Епĕ Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕнче иккĕмĕш çул пурăнатăп. Иртнĕ çулхипе танлаштарса пăхсан та пирĕн Хĕрлĕ Çар питĕ пысăк çитĕнӳсем тунă курăнать. Хĕрлĕ Çар кунна мар, сехет тăрăх çирĕпленет.

Епĕр хамăр комсомолецсемпе Хĕрлĕ Çар историне вĕренес ыйтуна вăйлатса йама йышăнтăмăр. Ку ыйту пирĕн хут çинче çеç тăрса йулмарĕ. Вĕренӳре пире граждăн вăрçинче паттăрăн кĕрешнĕ батальон комиссарĕ—Кольцов йулташ вĕрентет.

Праçник çывхарса килнĕ май, красноармейецсен çуртĕнче боецсем валли кашни каçпа пĕрех тĕрлĕрен лекцисем пулаççĕ (М. В. Фрунзе пурнăçĕпе унăн ĕçĕсем, граждăн вăрçи геройĕсем т. ыт. те). Кунсăр пуçне кунта час-часах ыйтусемпе ответсен каçĕсем пулса иртеççĕ. Кашни часре, подразделенинче красноармейецсем хăйсем тунă çитĕнӳсем çинчен диаграммăсем туса çакрĕç. Стена хаçачĕсем урлă çитĕнӳсем çинчен çырса, малала тата мĕн тумалине тĕплĕн кăтартма пуçăнчĕç.

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарнă майпа кашни часре социалисăмла ăмăрту анлăн сарăлса кайрĕ. Вĕренӳ ĕçĕнче, дисциплинăпа пурнăçлас ыйтура, ăмăртува хутшăнман пĕр подразделени те, пĕр красноармейец та çук.

Хĕрлĕ Çарта социалисăмла ăмăрту питĕ те пысăк çитĕнӳсем парать. Капитан Орлов йертсе пыракан подразделенинче нумай пулмасть, Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарнă май, вĕренӳре „отлично" паллă илме сăмах пачĕç. Курсантсем хăйсем илнĕ сăмахĕсене ахаль çухатмарĕç. Пайанхи куна пĕтĕмĕшпе илсен, отличниксен шучĕ 78 процента çитет. Начар вĕренекен красноармейец ку подразделенинче пĕр çын та çук. Малта пыракансем йулса пыракан курсантсене пулăшма пуçларĕç.

Пирĕн Алатырцев йулташ вĕренӳре йаланах йулса пыратчĕ. „Чăвашла каламаççĕ, вырăсла сахал ăнланатăп" тетчĕ. Çакăн хыççăн Алатырцева уйрăм командирсемпе боецсем хастарлăн пулăшса пыракан пулчĕç. Халĕ Алатырцев „хорошо" паллă илекен пулчĕ. Вăл хăй пек йулса пыракан Давыдова „хорошо" паллăпа вĕренсе пыма ăмăртăва чĕнчĕ.

Çакăн пек примерсем Хĕрлĕ Çарта татах та нумай.

Красноармейец В. Цыпленков.

* * *

Шупашкар хатĕрленет

Шупашкарта Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс Çар Флочĕ 20 çул тултарнă уйава хатĕрленнĕ май, оборонă ĕçне вĕренесси вăйланса пырать. Кашни кунмали кун республикăри спортпа тĕл перекенсен клубне 10-шер командă таран тĕл пеме вĕренме тата „Ворошиловский стрелок" значок нормисене пама пыраççĕ.

Февралĕн 18-мĕшĕнче хулари тĕл перекенсен ăмăртувĕ пулать. Февралĕн 6-мĕшĕнче Йустици Халăх Комиссариатĕнчи, Çутĕç Халăх Комиссариатĕнчи, йалхуçалăх тата педагогикă институчĕсенчи командăсем, пурĕ 8 командă, тĕл перессипе практикăла ĕçсем туса ирттерчĕç.

Тĕл перекенсен йанварĕн 18-мĕшĕнче пулнă ăмăртувĕнче арçынсенчен пединститутри Мухортов (50 очкоран 49 очко тивретнĕ), Орлов (50 очкоран 47 очко илнĕ) йулташсем малти иккĕмĕш вырăнсене йышăнчĕç. Хĕрарăмсенчен Кузнецова (Милици Управленийĕ) йышăнчĕ. Февралĕн 18-мĕшĕнче пулас ăмăртура пединститут хăйĕн участникĕсене ытларах тăратать.

Чăвашсен Коммунисла йалхуçалăх аслă шкулĕнче вĕренекенсем хăйсем йатарласа тунă вырăнта тĕл пеме вĕренеççĕ.

Пĕрремĕш номерлĕ шкулта вĕренекенсем те тĕл пеме вĕренес тĕлĕшпе интересленеççĕ. Вĕсен хăйсен тĕл пеме вĕренме йатарласа тунă вырăн—тир пур. Вĕренӳ çулĕ пуçланнăранпа шкулта вĕренекенсенчен 10 ача „ЮВС" тата 10 ача „ВС" значокĕсене илнĕ.

Государствă Банкĕн управленийĕнче ĕçлекенсем Хĕрлĕ Çар кунне хатĕрленме тытăннă май, автомобил вĕренме тытăнчĕç. Кружокра 25 çын тăрать, пурте çамрăксем. Кружок программине майăн 1-мĕшчен вĕренме пăхнă.

И. Лукинский.

200 çамрăка кружоксене йавăçтарнă

Канашри вагонсем йусакан заводра Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕн 20 çулхи уйавне хатĕрленесси анлăн сарăлса пырать. 1917—1918 çулта çуралнă допризывниксем хушшинче Çар ĕçне вĕренме кружоксем организациленĕ. Кружоксенче 200 çамрăк ытла вĕренет. П. Зеленин. А. Ананйев, Чуксейев йулташсем пур предметсемпе те „отлично" вĕренсе пыраççĕ.

Тăван çĕршывăн шанчăклă хуралçи Хĕрлĕ Çар 20 çул тултарнă йатпа заводра пысăк вечер пулса иртет. Унта граждан вăрçинче пулнă геройсем, партизансем хăйсем совет влаçĕшĕн мĕнле çапăçни çинчен каласа параççĕ.

Заводри библиотекă Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕн 20 çулхи уйавĕ çинчен витринă хатĕрлет. Унта Хĕрлĕ Çар çинчен çырнă политикла тата илемлĕ литературă кĕнекисем пулаççĕ. Çавăн пекех уйрăм фотоӳкерчĕксен витрини те пулать.

Халăхи вăхăтра заводри пур цехсенче те уйав тĕлне стена хаçачĕсем кăларма хатĕрленеççĕ.

Механически цехри рабочисем волейболпа вылямали кружок организациленĕ. Унта пĕтĕмпе 12 çын. Февралĕн 23-мĕшĕнче спорт, физкультура тата ытти выступленисем пулаççĕ.

Н. Йум.

Патăрйелти педучилищăра

Епĕр, Патăрйел педучилищинче вĕренекенсем, Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарнă уйава пысăк пахалăхсемпе кĕтсе илес тесе, социалисăмла ăмăртува тухрăмăр.

Комсомолецсем хушшинче вĕренӳ пахалăхĕ уйрăмах палăрма пуçларĕ.

Педучилищăра тĕрлĕрен кружоксем организацилерĕмĕр. Кружоксенче граждан вăрçинчи геройсем çинчен çырнă произведенисене вулатпăр.

Уйав кунĕнче ПВХО, „ГТО", БГТО тата „Ворошиловский стрелок" значокĕсене илме çине тăрсах хатĕрленетпĕр.

Уйав йачĕпе выставкă пулать.

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарни çинчен докладсем пулаççĕ. Вĕренекенсем колхозниксем хушшинче Хĕрлĕ Çар çинчен калаçусем тăваççĕ, илемлĕ литературă кĕнекисем вуласа параççĕ.

Хор кружокĕ кунсерен çак чаплă уйавра йурласа пама çĕршыв малала ӳссе пыни çинчен, Сталин йулташ çинчен, граждан вăрçи геройĕсем çинчен хунă йурăсене хатĕрлет.

М. В. Каримов.

Кашнин ГТО значокĕ пулать

Епĕр, Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строителствин Канашри базинче ĕçлекен комсомолецсем, Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарнă уйава кашнийех ГТО значок нормисене панипе кĕтсе илетпĕр. Халĕ нормăсене парасси хĕрӳлĕн пырать. Февралĕн 18-мĕшĕнче чукунçул строителствинче ĕçлекен комсомолецсем хушшинче йĕлтĕрпе йарăнассипе ăмăрту иртет. Ăмăртура малти вырăна тухассишĕн кĕрешетпĕр.

Çавăнпа пĕрлех епĕр „Ворошиловла тĕл перекенсен" значок нормине пама та вĕренетпĕр. Занятисене вăхăтра ирттеретпĕр.

И. Демйашкин.

Аван вĕренсе пычĕç

Канаш хулинчи тата Канаша çывăх Асхва, Вырăскас, Пикшик, Сухайкасси, Кармами, Кĕçĕн Пикшик йалсовечĕсенчи допризывниксем призыв умĕнхи хатĕрленӳ курсĕнчен вĕренсе тухрĕç. Вĕсенчен 30 проценчĕ „отлично", 56 проценчĕ „хорошо" паллăсемпе вĕренсе пычĕç. 34 допризывник „Ворошиловский стрелок", 100 çын ГТО тата 98 çын ГСО значокĕсене илме нормăсем пачĕç.

„Отлично" паллă илни ем полк шкулне вĕренме кĕме хатĕрленме йулчĕç. Вĕсем унта стена хаçачĕ кăлараççĕ. Физкултура, драмă тата музыкă кружокĕсем ĕçлеççĕ.

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарнă çĕре программăна вĕренсе пĕтерессишĕн тăрăшаççĕ.

Александров.

Хаçатсене пăхса тухни

Стена хаçачĕсене ĕçпе пулăшмала

Районри хаçатсен колхозра, бригадăра, учрежденисемпе предприйатисенче тухса тăракан стена хаçачĕсене йертсе пымала. Стена хаçат редакторĕсемпе редколлеги членĕсене, ĕçйалкорĕсене вĕрентсе çитĕнтермеле.

Редакторсемпе редколлеги членĕсем, ĕçйалкорсем вĕренесшĕн, хăйсен хаçатне лайăх политикăлă сивĕч хаçат туса кăларасшăн тăрăшаççĕ. Çакна тума вĕсене районти хаçат редакцисем, парторганизацисем йепчен пысăк пулăшу кирлĕ. Анчах районти хаçат редакцийĕсем стена хаçат редколлегисене кирлĕ таран йертсе пыраççĕ-и? Çук. Çакна „Чăваш Коммунĕ" редакцине килекен çырусем лайăх çирĕплетеççĕ. Акă хăшпĕр фактсем.

„Елĕк районĕнчи нумай колхозсенче стена хаçачĕсем йĕркелĕ тухса тăмаççĕ. Прошкино, Таутово, Лушашка колхозсенчи хаçатсем колхозниксене кăмăла кайакан йĕсем çинчен çырмаççĕ. Сăмахран, çав хаçатсем халĕ чи кирлĕ ĕçсем çинчен, çуракине хатĕрленес ĕçсем çинчен нимĕн те çырмаççĕ, вак-тĕвек ĕçсем çинчен çеç çыраççĕ. Ку вăл районти „Колхоз хаçачĕ" редакци стена хаçат редколлегисене йертсе пымаппинчен килет" (Йефремов йулташ çырăвĕнчен). „Колхоз хаçачĕ" стена хаçатсене пулăшас тĕлĕшпе чăннитех те нимĕн те тумасть. Иртнĕ çулти октябĕр, нойабĕр, декабĕр уйăхĕсенче пĕр колхозри стена хаçатне пăхса тухса хак пани пулман. Стена хаçачĕсене ĕçлеме пулăшакан пĕр статйа çырман.

Хĕрлĕ Чутайри (район центрĕнчи) колхоз çумĕнчи „Малала" хаçат нимĕн авторитетсăрри çинчен Ломоносовапа Огородникова йулташсем çырса пĕлтерчĕç. Хаçат мĕншĕн авторитетсăр-ха? „Малала" хаçат редакторĕнче М. Капитонов ĕçлет. Вăл йăла тĕлĕшĕнчен пăсăлса кайнă. Ĕçсе ӳрет, колхозри кахалсемпе çыхăннă, стахановецсене, ударниксене стена хаçат ĕçне йавăçтармасть. Çакна „Çĕнтерӳ çулĕ" хаçат редакцийĕ курса тăрать, анчах „Малала" стена хаçат ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе нимĕн те тумасть. „Çĕнтерӳ çулĕ" хаçатшăн пулсан, колхозсенчи стена хаçачĕсем мĕнле тухса тăни нимĕн те мар. Хаçатра стена хаçачĕсене обзор папипе, начар ĕçлекен редакторсемпе редколлеги членĕсене критиклени, лайăх ĕçлекенсен опытне кăтартни çук.

Стена хаçатсемпе вĕсене кăларакансем çинчен манса кайни питĕ начар ĕç. Пирĕн вĕсене куллен пулăшмала, ĕçпе йертсе пымала. Вĕсен ĕçĕсене тĕрĕслемеле, ситменлĕхĕсене палартса вĕсене сийĕнчех пĕтерме пулăшмала. Çак хушăрах лайăх ĕçлекен хаçатсен опытне сармала. Стена хаçат редакторĕ, редколлеги членĕ, йалкор—хаçат редакци валли кадр хатĕрлемелли тĕп резервă. Стена хаçачĕсем тавра темиçе ĕçйалкор пĕрлешсе тăрать, хаçатра ĕçлеме хăнăху илет. Ку вăл пирĕн ĕçйалкорсен йухăмне тĕреклетет. Районти хаçат редакцисен стена хаçатсене, вĕсене кăларакансене пур майсемпе пулăшмала.

Вăрман хатĕрлевĕ

Стахановецсен бригади

Тăватă çул иртнĕ ĕнтĕ Халим Алимов Çĕмĕрлери механизациленĕ вăрманпунктĕнчи Кабанова участкинче ĕçлеме пуçланăранпа. Тăватă çул хушшинче Халим Алимов вăрман касса хатĕрлес ĕçĕн техникине çеç мар, ытти рабочисене тухăçлă ĕçлеме вĕрентессине те çирĕппĕн алла çаварса илчĕ. Халĕ Алимов бригадăна йертсе пырать. Унăн бригадинче тăватă çын. Вĕсем пурте стахановецсем. Бригадă йанвар уйăх планне 125,6 процент тултарчĕ. Феврал уйăх планне 150 процентран кайа мар тултарма обйазателствă илчĕ.

Бригадир Алимов йулташ хăйсен ĕçĕсем çинчен çапла каласа парать:

Лашасем тĕрлĕ вăйлă пулаççĕ. Çавăнпа кашни лаша вăйне шута илмеле. Çуна çине лаша вăйĕнчен ытларах тийесен лаша ывăнать, итлеми пулать. Çакна лайăх астуса ĕçлетпĕр епĕр. Кунсăр пуçне тата крйажсене йавантарма пĕлни кирлĕ. Простой ан пултăр тесен тийенĕ чухне крйажсене çăмăлтараххăн илсе пăрахмала тийемеле.

Çапла ĕçленипе епĕр хамăрăн ĕç нормисене ытлашшипех тултарса пыратпăр.

Бригадăра социалисăмла ăмăртăва сарсах пыраççĕ. Кашни çын ăмăртса ĕçлет.

Çапла пулин те администрацийĕпе профсойуз организацийĕ рабочисене татах та лайăхрах ĕçлеме условисем туса парассипе начар ĕçлеççĕ. Ике уйăх иртрĕ ĕнтĕ, çапах рабочисене спецовкăсем (алса, çăматă т. ыт. те) памаççĕ. Баракра кăмака йусавсăр, вутă хутсанах тĕтĕм тухса тулать. Витре, тас, умывальник те çук. Культмассăлă ĕçе туса пымаççĕ. Бригадă членĕсем тепĕр чухне ернипех хаçат курса вулаймаççĕ. Рабочком хаçатсем вăхăтра тăратмасть.

П. Йав.

Стахановла ĕçлесси йерипен сарăлать

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Чукунçул çинче ĕçлекенсем хушшинче ССР Сойуз Аслă Совечĕн пĕрремĕш Сессии материалĕсене вĕреннĕ май, производствăлă активлăх çĕкленсех пырать. Стахановецсем паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ. Акă Иван Башкиров рельсăсене йусассипе йаланах плана 175—200 процент тултарса пырать. 12-мĕш отделенинче настройщикре ĕçлекен 54 çулхи Йефремов хăйĕн участкинчи çула отлично тытать, унăн пĕр пушă, йе тĕрĕс мар выртакан болтсем те çук. Çавăн пекех вагонсем йĕркелекенсем Йевстроновпа Сизов йулташсем те нормăсене 150—200 процент таран тултараççĕ.

Анчах пĕтĕмĕшпе илсен ĕç кайа йулса пырать-ха. Чукунçул станцин йанвар уйăхĕнче план тăрăх 1234 вагон тийемеле пулнă пулсан, вăл пĕтĕмпе те 855 вагон çеç тийенĕ. Ĕçсем феврал уйăхĕнче те лайăхланман. Уйăхăн малтанхи пилĕк кунĕнче тийес плана 70 процент та тултарман.

Вагонсем çителĕклĕ паманни ĕçе пысăк чăрмав кӳрет.

Начар ĕçленишĕн станцăри руководителсем тата профсойуз организацийĕ айăплă. Вĕсем стахановла йухăма вăйлатассишĕн çителĕксĕр ĕçлесе пыраççĕ-ха. Профорг Табункин стахановецсем çинчен тĕплĕн пĕлмест, стахановецсен опытне ытти рабочисем хушшине сарассипе канашлусем туса ирттермест. Социалисăмла ăмăрту договорĕсене те йатшăн çеç çырнă. Стена хаçачĕ вăхăтра тухмасть. Рабочисем хушшинче хаçат-журнал вуласа парасси те йĕркелĕ пулса пымасть. Стахановла йухăм йерипен сарăлса пырать.

Ĕçтухăçлăхне ӳстерессишĕн

Акшкӳлти механизациленĕ вăрманпунктĕнчи рабочисемпе инженерла-техникла работниксем тата служащисем стахановла уйăхлăха пысăк хастарлăхпа хутшăнчĕç. Вĕсем хăйсем умне стахановла уйăхлăх хушшинче 30 пин кубла метр вăрман хатĕрлес, 38 пин кубла метр турттарас задача лартрĕç. Турттарас хисепрен 18 пин кубла метрне механисăмсемпе турттармала. Ĕçе тĕрĕс йĕркелени тăрăх, ĕçтухăçлăхне хатĕрленĕ çĕрте 40 процент, турттарнă çĕрте 20 процент ӳстерессишĕн кĕрешĕве тухрĕç.

Хăйсемпе ăмăртса ĕçлеме Çĕмĕрлери механизациленĕ вăрманпункчĕн коллективне чĕнеççĕ.

Михайлов.

26.070 тенкĕлĕх тавар сутнă

ÇĔМĔРЛЕ. Кабанова вăрман участкинчи продавец И. Бондаррийев йулташăн йанвар уйăхĕнче 25.000 тенкĕлĕх тавар сутмала пулнă. Вăл 26.070 тăнкĕлĕх сутнă Феврал уйăхĕн малтанхи 4 кун хушшинче 5.062 тенкĕлĕх сутнă. Бондарйев йулташ таварçаварнăш планне йаланах тултарса пырать.

П. Й.

Йĕлтĕрçĕсен естафечĕ

ТРАК. Комсомол райкомĕ пуçарнипе районра йанварĕн 28-мĕшĕнчен пуçласа февралĕн 3-мĕшчен комсомолец-активиссенчен организациленĕ йĕлтĕрлĕ командăсен естафечĕ пулса иртрĕ.

Район тăрăх пурĕ 30 çынран организациленĕ пилĕк командă çӳрерĕ. Кашни командăрах агроном, зоотехник тата çавăн пек специалиссем пулнă.

Йĕлтĕрçĕсен командисем çуракине хатĕрленес ĕçре колхозсене нумай пулăшусем пачĕç. Вĕсем колхозсене социалисăмла ăмăрту договорĕсем, агропланĕсем тума пулăшрĕç. Сăмахран, йĕлтĕрçĕсен 4-мĕш команди пулăшнипе Пиюнкă йалсоветĕнчи „Коммунар" колхозпа „Правда" колхоз хушшинче социалисăмла ăмăрту договорĕ туса, колхозниксен пухувĕнче çирĕплетрĕç. Çакăн хыççăнах „Коммунар" колхоз хĕрӳлен ĕçе пуçĕнчĕ. Вĕсем ике кун хушшинче уйа 400 лав тислĕк кăларнă, йалхуçалăх машинисене йусаса лартнă. Çавалçырма йалсоветĕнчи колхозсем агротехникăна вĕренме кашни бригадăрах агротехникăна вĕренмели кружоксем йĕркелерĕç. Кружоксене йертсе пыма руководителсем палăртрĕç.

Ив. Хатайевски.

ИСПАНИРИ ФРОНТСЕНЧЕ

Гренадă патĕнче йулашки çапăçусем вăхăтĕнче сăртлă позицисене республикă çарĕсем йышăнни—пăлхавçăсене кăнтăр фрончĕн çав участкинче йăвăрлăха кертсе тăратăт. Икĕ кун çапăçнă хыççăн пăлхавçăсем унта 1.500 çын çухатнă. Пăлхавçăсен командованийĕ хăйĕн çарĕсене çапăçува хăратса илсе пырат. Фашиссен пĕр баталйон командирĕ çапăçура кайала чакнă пулнă, çавăншăн ăна персе вĕлернĕ. Пăлхавçăсем фронтăн малти линисене ÿссе çитеймен ачасене йараççĕ, нумайах та пулмаст вĕсене Франко приказĕ тăрăх мобилизациленĕ.

Февралĕн 8-мĕшĕнче ирхине Италин ултă самолйочĕ Сагунто йатлă порт çине (Валенçирен çурçĕрелле) 60 бомба пăрахнă.

Иртнĕ çулхи февралĕн 13-мĕшĕнчен пуçласа (ун чухне фашиссен авиацийĕ Барçелонă хули çине чи пирвайхи хут бомбăсем пăрахнă) пăлхавçăсем Барçелонă çине 23 хутчен пырса бомбăсем пăрахнă.

Пурĕ 528 бомбă пăрахнă. Бомбăсем пăрахнипе гражданла халăхсем хушшинче вилнисемпе аманнисем 3.467 çын шутланаççĕ, вĕсенчен 998-шĕ—вилнĕ. Хулара 863 çурт ишĕлнĕ.

(ТАСС).

Тыткăна лекнĕ Йапони салтакĕсем Шаньсире

Китайра тухакан журналсенчен пĕри çырнă тăрăх, Шаньси провинцинче саккăрмĕш революцилĕ халăх çарĕ тыткăна илнĕ Йапони салтакĕсенчен чылайĕшĕ вăрçа хирĕç шухăшлă тата вĕсем хальь Китайра пыракан вăрçăшăн Йапони правительствине сивлеççĕ. Йапонин тыткăна лекнĕ салтакĕсем,—тесе çырат малала журнал,—хăйсем Китай çарне пулăшма пулнине кăтартнă. Вĕсем китайецсене Йапонин кучухнехи çĕнĕ хĕçпăшалĕсемпе мĕнле усă курмалине кăтартса панă. Тыткăна лекнисенчен нумайĕшĕсем китайецсене вĕрентме хăйсен ирĕкĕпех инструкторсем пулма килĕшнĕ. Вĕсенчен вицçĕшĕ саккăрмĕш çар штабĕнче Йапони ыйтăвĕсем тĕлĕшпе експертсем пулса ĕçлеççĕ. Китай çарĕнчи салтаксем тыткăна лекнисемпе кăмăллăн калаçаççĕ, вĕсене кÿрентермеççĕ. Йатарласа тунă политикăлă курссенче вицĕ уйăх хушши вĕрентсен, вĕсене ирĕке кăлараççĕ.

(ТАСС).

Жак Дÿкло статйи

ПАРИЖ. февралĕн 8-мĕш. (ТАСС). „Пюманите“ хаçат Франци компарти Тĕпкомĕн политбюро членĕ Жак Дÿкло Францири коммунисла тата социалисла партисене пĕрлештерес ыйтупа çырнă статйине пичетлесе кăларнă. Дÿкло хăйĕн статйинче социалисла партин иртнĕ çулхи йуль уйăхĕнче Марсельре пулса иртнĕ сиесĕ панă пĕрлешмели условисене компарти пĕтĕмĕшпех йышăннине аса илтерет. Çапла пулсан та,—тет Дÿкло,—социалисла парти руководстви пĕрлĕхе хирĕç маневăрсем тăват тата пĕрлешессипе ĕçлекен комиссире калаçса татăлассине тĕппех татса хучĕ. Ку предпринимателсен пĕрлешÿвĕсене рабочи массисем çине тапăнассипе вăйлатма май парат, фашиссене вĕсен заговорла тата террорла ĕçсенче хавхалантарат тата халăх фрончĕ çине унăн тăшманĕсене тапăнтарат.

Министерсен кризисне,—вăл кризис халăх фронтне хирĕç пырат,—тĕпчесе тухса, Дÿкло çапла çирĕплетет: Францири социалисла парти коммунисла парти пекех тăрăшнă пулсан, хальхи вăхăтра çĕршывра хăйсен составĕпе халăх сасăлани хисеппе килĕшекен правителствă пулнă пулĕччĕ. Пĕрлĕхлĕ парти пулнă пулсан, ку ĕçре чăн-чăн пĕрлĕх фрончĕн правителствине тума никам та чăрмантарма пултарайман пулĕччĕ. Социалисла парти руководствине хирĕç, чылай выраçти организацисенче социалиссемпе коммунистсем пĕрлешес ыйтупа калаçса татăлас ĕçе малала та туса пыраççĕ,—тесе палла тăват Дÿкло. Коммунисла тата социалисла партисен, халăх массисен ыйтувĕсене пурнăçа кĕртме организацилĕ пĕрлĕхлĕ пулма, хăвартрах тепĕр хут калаçса татăлма хушат Дÿкло.

ЙУТÇĔРШЫВСЕНЧЕ

◆◆ Февралĕн 7-мĕшĕнче Лодзре (Польшă) ĕççĕр тăрса йулнисен вăйлă демонстраци пулса иртнĕ. Демонстрацине полици хăваласа салатса йанă.

◆◆ Гуандун провинцинчи (Китай) халăхран самооборонă отрйачĕсем организациленеççĕ. 18 çултан пуçласа 48 çула çитнĕ пур арçынсене те çав отрйадсене кĕртеççĕ.

◆◆ Франци хаçачĕсенче Италин суту-илÿ флотĕнчи пĕр офицертан илнĕ çыру пичетлесе кăларнă. Вăл çырура çапла каланă:

„Испани суту-илÿ флочĕн Франко генерал аллине йулнă хĕрĕх карапне хаљ çеç Италийе панă. Вăл карапсене Испани халăхĕнне вăрланă“,—тенĕ.

◆◆ Польшăри Краков войеводствинче чуханлăха пула хăйсене хăйсем вĕлерекенсем нумайланса пыни палăрат. Ĕççĕр тăрса йулнă 65 çулхи Миклер тата унăн 63 çулхи арăмĕ нумайах пулмаст хăйсене хăйсем вĕлернĕ. Карчăкпа старик çыру çырса хăварнă. Вăл çырура вĕсем: епĕр ĕççĕр тăрса йулнă майпа илекен 20 злотых укçа „пурăнмашкăн ытла та сахал“—тесе çырнă.

(ТАСС).

Пулă тытакан колхозсене 53 мĕлйун тенкĕ премн панă

МУСКАВ, февралĕн 9-мĕш. (ТАСС). 1937 çулта пулă тытас ĕçпе ĕçлекен колхозсене пулăна планпа кăтартнинчен ытлашши тытнăшăн государствă 53 мĕлйун тенкĕ премн панă. Чи пысăк премисене: Инçет-Хĕвелтухăç крайĕнчи пулă тытакан колхозсем 14,5 мĕлйун тенке йахăн, Донрипе Кубаньри пулăççем—11 мĕлйун тенкĕ, Мурманскри колхозсем 7 мĕлйун тенкĕ, Дагестанри колхозсем—2мĕлйуна йахăн, Ленинградпа Архангельск облăçĕсенчи пулăç-колхозниксем 2 мĕл йун та 800 пиншер тенкĕ илнĕ.

Хуçалăх ĕçĕнче йертсе пыма уйăрнă комсомолецсен канашлăвĕ

Производствăра тата хуçалăхра тĕрлĕ ĕçсене йертсе пыма уйăрнă комсомолецсен канашлăвĕ, икĕ кун хушши ĕçленĕ хыççăн, февралĕн 9-мĕшĕнче хупăннă. ПСÇЛКС Тĕп Комитечĕ пухнă канашлура çамрăк бригадирсем, маçтăрсем, цехсемпе продотсен начальникĕсем, заводсен директорĕсемпе аслă инженерĕсем—пурĕ 200 çын пулнă. Канашлура ПСÇЛКС Тĕп Комитечĕн секретарĕсемпе бÿро членĕсем те пулнă.

Йертсе пырас ĕçе уйăрса лартнă çамрăксем хăйсен производствăри ĕçĕсен ыйтăвĕсене, ĕçри çитменлĕхсемпе йăвăрлăхсем çинчен сÿтсе йавнă.

Тухса каланисем пурте производствăна малала хăпартассишĕн пĕтĕм вăйа хурса ĕçлеме хатĕрри çинчен каланă. Ĕçе çакăн пек организацилемеле—уйрăм рекордсенчен стахановла цехсем тата стахановла заводсем туса хумала пултăр, тенĕ вĕсем.

Йулашкинчен канашлура ПСÇЛКС Тĕпком çекретарĕ Косарев йулташ тухса каланă.

(ТАСС).

Пĕтĕм Сойузри Пушкин выставкинче

Çулталăк кайарах—1937 çулхи февралĕн 10-мĕшĕнче Совет Сойузĕнчи ĕççыннисем А. С. Пушкин вилнĕренпе 100 çул тулнă куна калама çук пысăк йуратупа палла турĕç. Иртнĕ çул пĕтĕм çĕршыв тăрăх вырăссен аслă поетне асăнса тунă пит нумай вечерсемпе, унăн произведенийĕсене тĕрлĕрен нумай изданисемпе кăларнипе, театрсенчи постановкăсемпе тата выставкăсемпе палла пулчĕ.

Правителствă решенийĕ тăрăх Мускавра государствă историлĕ музейĕн залĕсенче уçнă Пĕтĕм Сойузри Пушкин выставкипе ĕççыннисем çав тери хытă интересленчĕç. Хăйĕн анлăшĕпе пит пысăк выставкă 17 зал йышăннă. Унта 15 пин ытла тĕрлĕрен експонатсем пухнă.

Иртнĕ çулталăк хушшинче выставкăна 640 пин çын кĕрсе курнă.

(ТАСС.)

А. С. Пушкин произведенийĕсем тăрăх çĕнĕ фильмсем ÿкереççĕ

Мосфильм студийĕнче вырăссен аслă поечĕн А. С. Пушкинăн „Руслан и Людмила“ йатлă поеми тăрăх „Руслан и Людмила“ йатлă саслă илемлĕ фильм ÿкерсе пĕтереççĕ.

Фильм март уйăхĕн варри тĕлнеле хатĕр пулат.

Хальхи вăхатра „Пиковая дама“ йатлă саслă илемлĕ фильм ÿкерме хатĕрленеççĕ.

(ТАСС).

Совет Сойузĕ тăрăх

◆◆ Воронежра кăшман акса тăвакан колхоз стахановецĕсен канашлувĕ хупăннă. Унта 930 делегат пулнă. Канашлу мĕн пур колхозниксене кăçал иртнĕ çулхинчен тата ытларах кăшман туса илме чĕннĕ. Сљотăн çĕр делегатне премисем панă.

◆◆ Днепропетровск облăçĕнче ăшă, хĕвеллĕ çанталăк тăрат. Чылай районсенче çурхи суха тума пуçланă. Акимовск районĕнчи колхоз хирĕсенче 16 трактор ĕçлет. Çурхи сухана Мелитопольскпа Геническ районĕнчи колхозсенче те сухалама пуçланă.

◆◆ Угольщиксен Сойузĕн Тĕп Комитечĕ кăçал 13.100 горњака канмали çуртсемпе курортсене йарат. Горњаксен ачисене—мĕн пурĕ 1.500 ачана—пионер лагерĕсене тата санаторисене йараççĕ.

(ТАСС).

Хаклă изобретени çине çавăрăнса пăхмаççĕ

Грибов Семен—Вăрмар районĕнчи Исаклă йал çынни. Вăл изобретени йенĕпе интересленсе ĕçлет. Грибов Семен 1937 çулта пĕр аппарат шухăшласа кăларнă. Ку аппарат вăл—трактора автолпа краçин сĕрнĕ хыççăн тасамарланса кайсассăн тепĕр хут тасатса, вĕсене çĕнĕрен усă курмала тăват. Çак ĕçе Çĕрĕç халăх комиссариачĕ çумĕнчи Тĕштырă тытăмĕ тĕрĕслесе сăнаса пăхнă хыççăн, ку аппаратпа усă курма май пурри курăннă. Çавăнпа та вĕсем ку аппаратпа сăнавлă ĕçлесе пыма Вăрмар МТС директорне—Тагачин йулташа хушнă. Анчах та Тагачин, çавăн пекех тата унăн заместителĕ Попов йултăшсем изобретени ĕçне хак памасăр çулталăк ытла ĕнтĕ ку аппаратпа усă курмаççĕ.

Çакăн пек хаклă изобретенипе, çулталăкра 346.600 тенкĕ перекетлекен аппаратпа çулталăк ытла усă курмасăр пураннăшăн Тагачинпа Попов йултăшсене ответ тытармала.

Ил. Сидоркин.

ХРОНИКА

* Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Иван Йевдокимович Свешников йулташа Чăваш АССР Çĕрĕç халăх комиссарĕн заместителне лартнă.

* Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Йемелйан Николайевич Николайев йулташа Чăваш АССР Çĕрĕç халăх комиссариачĕ çумĕнчи Тĕштырă управлени начальникне лартнă.

* Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Иван Семенович Димитрийев йулташа Чăваш АССР Çĕрĕç халăх комиссариачĕн Планпа финанс управлени начальникне лартнă.

* Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Николай Александрович Шчетинин йулташа Чăваш АССР Çĕрĕç халăх комиссариачĕн Машинпа техника пайĕн начальникне лартнă.

„Колхозник йалавĕ“ хаçат редакцийĕ 1938 çулхи йанварĕн 28-мĕшĕнче тухнă 10-мĕш номĕрте Йĕпреç районĕнчи Епеç йал çынни С. Федотов ыйтăвĕ çине тĕрĕс мар ответ пани çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

1. Халăх Комиссарĕсен Совечĕ „Колхозник йалавĕ“ хаçат редакцийĕ 1938 çулхи йанварĕн 28 мĕшĕнче тухнă 10-мĕш номĕрте Федотов гражданин ыйтăвĕ çине вăрман хатĕрлевĕнче ĕçлекен колхозниксене тÿлесси çинчен пачах тĕрĕс мар ответ панă тесе шутлат.

Редакцин ответĕ вăрман хатĕрлевĕнчи ĕçе дезорганизацилет тата ССР Сойуз Халăх Комиссарĕсен Совечĕн 1937 çулхи февралĕн 16-мĕшĕнче йышăннă 270-мĕш номĕрлĕ постановленине хирĕçлет.

2. Колхоз правленисене тата колхозниксене ССР Сойуз Халăх Комиссарĕсен Совечĕн 1937 çулхи февралĕн 16-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх, вăрман хатĕрлевĕнче ĕçленĕшĕн колхозниксене ĕçкунĕпе тÿлемели малтанхи йĕркене пăрахăçа кăларни çинчен ăнлантарса парас.

Постановленин 5-мĕш статйинче çапла каланă: „Уйрăм районсенче халиччен пулнă йĕрке тăрăх колхозниксен ĕçукçине колхоза тÿлес, вăрман касакансене тата турткаракансене вăрманта ĕçленĕшĕн колхозран ĕçкунĕ шутласа парас йĕркене пăрахăçа кăларас.

Вăрман хатĕрлевĕнче тата вăрман йухтарас ĕçре ĕçлекен колхозниксене договорсем туса килĕшнĕ тăрăх, ĕçукçине вăрманпромхозсен (вăрман транспорт хуçалăхĕсен) кашнине уйрăмăн тÿлемеле тăвас“...

3. Вăрманпромхозсен директорĕсене тата колхоз правленисене вăрман хатĕрлевĕнче ĕçлекен колхозниксемпе расчет тунă чухне ССР Сойуз Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1937 çулхи февралĕн 16-мĕшĕнче йышăннă 270-мĕш номĕрлĕ постановленине çирĕппĕн пăхăнма хушас.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ Л. Спасов.
Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ĕçĕсене тăвакане— Н. Жуков.

1938 ç. февралĕн 9-мĕшĕ.

Извещение

Нижеследующие товарищи вызываются для участия при разборе их апелляций на выездное заседание Партколлегии при Уполномоченном КПК при ЦК ВКП(б) по Чувашской АССР.

13 февраля 1938 года к 10 часам утра в Канаше:

1. Федоров А. В.—Канашский РК.
2. Евдокимов Н. Е.—Канашский РК.
3. Никонов Ф. Н.—Канашский РК.
4. Петухов К. В.—Канашский РК.
5. Кудрявцев М. А.—Шихазановский РК.
6. Петров Виктор — Шихазановский РК.
7. Беспалов—Шихазановский РК.

14 февраля 1938 года к 10 часам утра в Канаше:

1. Кудаков Т. М. — Шемуршинский РК.
2. Нефедов И. М.—Урмарский РК.
3. Матвеева Д. С. — Шемуршинский РК.
4. Макаров С. М.—Янтиковский РК.
5. Сафин Х. С.—Шихирдановский РК.
6. Смирнов П. К.—Батыревский РК.
7. Григорьев В. Т.—Ибресинский РК.

16 февраля 1938 года к 10 часам утра в Шумерле:

1. Серебряков П. В.—Красно-Четайский РК.
2. Мигушина Е. К. — Красно-Четайский РК.
3. Кузьмин В. Х. — Красно-Четайский РК.
4. Кузнецова В. П. — Красно-Четайский РК.
5. Тарасов М. П.—Шумерлинский РК.
6. Митюков П. М.—Вурнарский РК.
7. Краснов М. Н.—Вурнарский РК.

19 февраля 1938 года к 10 часам утра в Алатыре:

1. Кашин М. И.—Алатырский РК.
2. Гаврилов М. Г.—Алатырский РК.
3. Пичугин Н. И.—Алатырский РК.
4. Серебряков К. С.—Алатырский РК.
5. Серебряков И. С.—Алатырский РК.
6. Наумов А. Г.—Алатырский РК.
7. Бормоткин Ф. С. — Кувакинский РК.
8. Павленков А.—Порецкий РК.
9. Анисимов И. А.—Алатырский РК.

Райкомам ВКП(б) просьба обеспечить явку вышеуказанных товарищей и выслать своих представителей с материалами.

ПАРТКОЛЛЕГИЯ.

Ответлă редактор ĕçĕсене тăваканĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

„ЧĂВАШКИНО“ ТРЕСТНЕ
економист-плановик
тата
бухгалтер-ревизор
к и р л ĕ.

Заньати вăхăтĕнче „Чăвашкино“ тресчĕн аслă бухгалтерĕ патне пымала. Саслă кино-театр çурчĕ.

2—1

КОГИЗ МАГАЗИНĔСЕНЧЕ

Шупашкарта, Улатăрта, Канашра, Сĕмĕрлере, Йĕтĕрнере, Çĕрпÿре, Сĕнтĕрвăрринче, Куславккара тата Патăрйелĕнче

Сталин йулташ 1937 ç. декабĕрĕн 11-мĕшĕнче Мускав хулинчи Сталинский суйлав округĕнчи суйлавçăсен суйлав умĕнхи пухăвĕнче каланă сăмахне çырнă граммофон пластинкисен комплекчĕсене

çырăнса илме пулат.

Çырăнса илмели условисем:

5 пластинкăлă комплект, илемлĕ альбомра, йĕпсемпе пĕрле 22 тенкĕ тата альбомсăр комплект, коробкăра, 11 тенкĕ те 50 пус.

КОГИЗ-ăн Чăваш республикĕнчи уйрăмĕ

Чăваш АССР Сывлăха сыхлав халăх комиссариачĕ

Шупашкарта, Тĕп дезостанци çумĕнче

ДЕЗИНФЕКТОРСЕН 3 УЙĂХЛĂХ КУРСНЕ ОРГАНИЗАЦИЛЕТ

Курса 7 çултан кайа мар вĕреннисене илеççĕ.

Курсантсене вальли общежити пур, тата стипенди параççĕ.

Курсра вĕренме районсенчи сывлăха сыхлав пайĕсем панă командировкăсем тăрăх пынисене çеç йышăнаççĕ.

Заньатисем кăçалхи февралĕн 20-мĕшĕнче пуçланаççĕ.

3—1

Капиталисăмла тĕнчен чирлĕ хуçалăхĕ

Капиталисăмла хуçалăхăн йĕрки те план та çук. Фабриксемпе завод хуçисем хуçалăха усăм ытларах илес тĕллевпе тытса тăраççĕ. Капиталиссем хăйсен таварĕсене сутма пултарнă чухне, вĕсен завочĕсемпе фабрикĕсем йĕркелĕ ĕçлеççĕ. Анчах капиталиссем чухне халăхăн чи пысăк пайĕ хăйне кирлĕ йапаласене илме пултараймаст. Çавăнпа та рыноксенче таварсем халăх илме пултарнинчен ытларах пулаççĕ.

Рынокра тавар ытлашши нумай, ăна илекенсем çук чухне капиталисăмла хуçалăх системи кисренет—економикăлă кризис пуçланса кайат. Рынокра таварсем нумай—вĕсене илекен çук. Çакăн пек чухне капиталиссем производствăна чакараççĕ. Темиçе мĕлйун çын ĕççĕр тăрса йулат, вĕсен хăйсене тăранса пурăнма нимĕн те йулмаст. Ку вăл тавар илекенсен шутне пушшех ытларах чакарат. Хаксем йÿнелеççĕ, капиталиссен предприйатисем банкрота тухаççĕ, хупăнаççĕ. Капиталисăмла хуçалăх, сивĕ чир тытнă пек чĕтресе ÿкет, унăн хуçалăхне економикăлă кризис сиклет.

Капиталисăмла тĕнчери йалхуçалăхĕнче те промышленнăçри вăйлă економикăлă кризиссем пулаççĕ.

Економикăлă кризис ĕççыннисене питĕ пысăк йăвăрлăхсем патне илсе пырат. Рабочисен чылай пысăк пайĕ ĕççĕр тăрса йулат. Ĕççĕр тăрса йулнă çын кризис вăхăтĕнче ниçта ĕç тупса ĕçлеме пултараймаст. Ĕç ыйтакансем нумай пулнипе усă курса, капиталиссем производствăра ĕçлекен рабочисен ĕçукçине чакараççĕ. Темиçе мĕлйун çын выçăпа аптăрат. Выçлăх пирки сикекен чирсем сарăлса каяççĕ. Преступлени тăвакансем, проститутки нумайланат, темиçе çĕр çын хăйне хăй вĕлерет. Çакнашкал ĕнтĕ капиталисăмла тĕнчере пулакан економикăлă кризис. Капиталисăм стройĕ чухне економикăлă кризиссем кашни 7—11 çулта пĕрре пулса пыраççĕ.

Йулашки хут пулнă економикăла кризис 1929 çулта пуçланса кайнă. Вăл чылай çул хушши пычĕ, буржуалă çĕршывсенчи ĕççыннисене нумай асаплантарчĕ.

Халĕ капиталисăмла тĕнче çĕнĕ кризис пуçланас вăхăт умĕнче тăрат. Çакна чи пуйан капиталисăмла çĕршывра—Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсенче производствă чакни тата ĕççĕр тăрса йулнисем нумайлани çирĕплетет.

1937 çулăн варринчи вăхăтпа танлаштарсан, Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсен производстви 1938 çул пуçламĕш тĕлне 0,5 пайĕ чакнă. Промышленнăçăн чылай отраслисен производстви тата ытларах чакнă. 1938 çул пуçламĕшĕ тĕлне Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсенчи хурçă шăратакан промышленнăç хăй ĕçлеме пултарнинчен 25 процент çеç ĕçленĕ. Хурçă тăвас ĕç çак йулашки 3 уйăх хушшинче çурри ытла чакнă. Иртнĕ çулти октабĕр уйăхĕнче хурçă шăратакан 30 кăмака (домнă) ĕçрен тухнă.

Темиçе мĕлйун рабочийе урама кăларса йанă. Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсенче ĕççĕр тăрса йулнисен шучĕ 14 мĕлйун çынна çитнĕ. Ку хисепе ернере 2—3 кун çеç ĕçлекенсем кĕмеççĕ. Вĕсене кĕртсен ĕççĕр йулнисен хисепĕ тата нумайланат. Автомобиль промышленнăçĕнче 500 пин рабочи пулнă пулсан, халĕ 300 пинĕ ĕççĕр тăрса йулнă.

Фактсем Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсенче çĕнĕрен економикăлă кризис пуçланса кайнине кăтартаççĕ. Ку вăл тĕнчери економикăла кризис тапраннине пĕлтерет тесе каламала. 1929 ç. пулнă кризис та Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсенче пуçланса кайнă, унтан вăл пĕтĕм капиталисăмла тĕнчене сарăлнă.

Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсен капиталисăмла хуçалăхĕ буржуалă ытти çĕршывсен хуçалăхĕпе тачă çыхăннă. Америкăри предприйатисенчи йăвăрлăх ытти çĕршывсене куçассинчен нимĕн иккĕленмели те çук. Йевропăри çĕршывсенчи хуçалăх лару-тăрувĕ йăвăрланни халех сисĕнет.

Сăмахран, 1937 çулăн йулашки 3 уйăх хушшинче Англире ĕççĕр тăрса йулнисен хисепĕ 353 пин çын нумайланнă. Халĕ Англире ĕççĕр тăрса йулнисем 1.755.000 çын. Нумай предприйатисем, уйрăмăн илсен, автомобиль тăвакан заводсем пĕтĕм ернипех ĕçлемеççĕ.

Польшăра пĕр журналист шутласа кăларнă тăрăх, ĕççĕр тăрса йулнисем 2 мĕлйун çын ытла. Польшăри „Нова Правда“ хаçат Радома хулинчи ĕççĕр тăрса йулнисен пурнăçĕ çинчен çапла çырат: Радома хулинчи ĕççĕр тăрса йулнисем шутсăр начар условире пурăнаççĕ. Ыйткаласа çÿрекенсем, выçă ларакансем, çĕтĕк-çатăк çÿрекен çынсем пулса лайăх пурнăçа кĕтеççĕ, анчах çав çынсен пурнăç вĕсемшĕн тата ытларах асаплă. Ĕç биржисем умĕнче ĕç ыйтса черетре тăракан çынсем çине пăхни те вĕсен пурнăçĕпе условийĕ мĕнлине лайăх кăтартат.

Хуçалăха сив чир силлеме пуçлани Америкăран Йевропăна куçат. Çак çĕршывсенчи ĕççыннисене питĕ пысăк йăвăрлăх хăрат. Капиталисăмла строй темиçе мĕлйун ĕççыннисене хуйхă, выçлăх, чуханлăх парат. Социалисăмла строй çеç ĕççыннисене телейлĕ те савăнăçлă пурнăç парат. Мĕнпе тесен, социалисăмла çĕршывра кризис та, ĕççĕр тăрса йулнисем те пулмаççĕ.

Пирĕн совет çĕршывĕн социалисăмла хуçалăхĕ план тăрăх ÿсе тĕрекленсе пырат, унта кризис çук, ĕççĕрлĕх çук. Совет Сойузĕнче чуханлăх, ĕççĕрлĕх, выçлăх çук. Епĕр хамăрăн малашнехи кун çине шанчăклăн пăхатпăр: пирĕн çĕршывăн вăй-хăвачĕпе пуйанлăхĕ çулран çул ÿсет.

И. Александров.

Пуçламĕшпе вăтам шкулта ĕçлекенсен Сойузĕн облăç комитечĕн пленумĕ

Кăçалхи февралĕн 17-мĕшĕнче Шупашкарта Чăваш АСС Республикĕнчи пуçламĕшпе вăтам шкулта ĕçлекенсен Сойузĕн Обкомĕн II-мĕш пленумĕ пухăнат.

Кун йĕркинче:

1. РСФСР Пуçламĕшпе вăтам шкулта ĕçлекенсен 1-мĕш сиесĕн итогĕсем. (Владимиров йулташ доклад тăват).

2. Учителсен политикăлă вĕренÿвĕ мĕнле пыни çинчен:

а) Улатăр районĕ тăрăх Сойузăн районри комитет председателĕ Рйабов йулташ;

б) Канаш районĕ тăрăх районри сутĕç пайĕн пуçлăхĕ Федоров йулташ.

3. 1938 çулта тумали ĕçсен планĕсене йышăнса çирĕплетесси.

4. Организацилĕ ыйтусем.

Пленум членĕсемпе кандидачĕсен тата Сойузăн районсенчи комитет председателĕсен пленума пымала.

Чăваш АССР пуçламĕшпе вăтам шкулта ĕçлекенсен Сойузĕн Облăçри комитет президиумĕ.

Чăваш АСС Республикин Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи физкультурăпа спорт ĕçĕсен комитечĕн физкультурă инструкторĕсемпе кĕçĕн преподавателсем хатĕрлекен курса

ЗАЙАВЛЕНИСЕМ ЙЫШĂНАÇÇĔ

КУРС ÇАКСЕНЕ ХАТĔРЛЕТ:

райĕçтăвкомсем тата республикăри ирĕклĕ спорт обществисем вальли квалификацилĕ инструкторсем, вăтам тата туллимар вăтам шкулсенчи физкультурăпа вĕрентекен кĕçĕн преподавателсем.

КУРСА ÇАКСЕНЕ ИЛЕÇÇĔ:

арçынсемпе хĕрарăмсене 17 çултан пуçласа 35 çулхисем таран, туллимар вăтам шкул чухлĕ пĕлÿ илнисене тата пĕрремĕш сыпăкри ГТО значок нормисене панисене.

ВĔРЕНМЕЛИ СРУК 6 УЙĂХ

Зайавленипе пĕрле çак документсене тăратмала: туллимар вăтам шкул пĕтерни çинчен аттестат (подлинникне); çурални çинчен справкă; физкультурă йе комсомол организацинчен илнĕ характеристикă; пĕрремĕш сыпăкри ГТО значок нормисене пани çинчен справкă; ĕçленĕ, çĕртен хăтарни çинчен справкă; айакран килес текенсем документсемпе пĕрле 40 пуслăх маркă йараççĕ.

ЗАЙАВЛЕНИСЕНЕ 1938 ÇУЛХИ ФЕВРАЛĔН 15-МĔШЧЕН ЙЫШĂНАÇÇĔ.

Зайавленисемпе документсене çак адреспе йамала: ЧАССР, Шупашкар хули, Ленинградская урамĕ, 16, Физкультурăпа спорт ĕçĕсен комитечĕ.

Курса вĕренме илнисене вĕреннине кура 150 тенкĕрен 250 тенке çити стипенди тÿлеççĕ. Айакран килекенсене вальли общежитипе выртса тăмалли хатĕрсем пулаççĕ.

Курсра вĕренме 1938 çулхи мартăн 1-мĕшĕнчен тытăнаççĕ. Вĕренме физкультурă Комитечĕ чĕннипе кăна килмеле.

Курса вĕренсе пĕтернĕ хыççăн 2 çултан кайа мар Чăваш АСС Республикинче ĕçлемеле.

Чăваш АСС Республикин Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи физкультурăпа Спорт ĕçĕсен Комитечĕ.

3—2

„Чăваш коммунĕ“ çырăнса илмели хаксем; 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 74 Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чуваполиграфтреста. Заказ № 83. Тираж 15.500 52—94 см. 1—1 п. л.